чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН
2014, çĕртме /июнь/ 28

124-125 /26530-26531/ № №    Хакĕ ирĕклĕ    www.hypar.ru

# Чи маттуррисене саламларĕç




Çулленех И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче чи лайăх 100 студента палăртаççĕ. Çак ята общество ĕçне хастар хутшăнакан, вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пыракан, спортпа туслă яш-кĕрĕмпе хĕр-упраç тивĕçет. Кăçал лайăххисенчен лайăххисене çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕнче чысларĕç. Уява савăнăçлă лару-тăрура ЧПУ ректорĕ Андрей Александров, ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ-ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов уçрĕç.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ кăçал 47 çул тултарать. Çавна май вĕренсе тухакан 100000-мĕш студента палăртрĕç. Çак ята энергетикăпа электроэнергетика факультечĕн магистранчĕ Илья Чернышов тивĕçрĕ. Андрей Александров пултаруллă та маттур çамрăка саламласа айпад парнелерĕ.

**Ирина КОШКИНА.**
Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

# "Çӳлтен" çирĕп сăнаççĕ

*Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер РФ Правительствин вице-премьерĕ Дмитрий Козак ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри селектор канашлăвне хутшăннă. Унта регионсен граждансене юхăннă çуртсенчен куçармалли программисене пурнăçлас, граждансен коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн хывакан тӳлевĕсене виçеллĕ тăвас ыйтусене сӳтсе явнă.*

Дмитрий Козак граждансене кивĕ çуртсенчен куçарасси РФ Президенчĕ палăртнă политика тĕллевĕ пулнине аса илтернĕ. Çав йышăнăва пурнăçлама РФ Правительстви федераци бюджетĕнчен пĕрле уйăракан укçа виçине 42-рен 65% таран пысăклатнă, программăна пурнăçламалли вăхăта тăснă, регионсене субсиди памалли условисене çăмăллатнă. Вице-премьер çак ĕçе çирĕп тĕрĕслесе тăнине палăртнă, субъектсен ертӳçисене подрядчиксемпе хушма килĕшӳсем тума, вĕсем хăйсен обязательствисене пурнăçламаншăн усă куракан санкцисене çирĕплетме сĕннĕ: "Ĕçсене вăхăтра пурнăçламасан финанс тĕлĕшпе çирĕп яваплăх пулмалла".

Чăваш Республикинче асăннă программăна пурнăçласа ЖКХна реформăлама пулăшакан фонд тĕрев панипе 2017 çулччен 13,5 пин çынна кивĕ çуртсенчен куçарма пăхнă. Çак тĕллевпе 4979,6 млн тенкĕ уйăраççĕ.

Хальхи вăхăтра программăн 1-мĕш тапхăрне пурнăçлаççĕ. Вăл кăçалхи раштавра вĕçленмелле. Пĕтĕмпе 3,9 пине яхăн çынна, юхăннă 264 çуртра пурăнаканскерсене, куçарма палăртнă. 2015 çулхи раштавăн 31-мĕшĕччен вĕçлемелли 2-мĕш тапхăра та пурнăçлама тытăннă. Тата 2,9 пин ытла çынна куçармалла.

ЖКХри пулăшу ĕçĕсемшĕн тӳлессине йĕркелесе пырасси çинчен Федерацин тариф службин ертӳçи Сергей Новиков каласа панă. Халĕ çĕр-шывра граждансен тӳлевĕсене утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2018 çулччен вăрахлăха йĕркелессине палăртнă. Субъектсен шайĕнче утă уйăхĕн 1-мĕшĕччен тивĕçлĕ норма докуменчĕсене хатĕрлемелле. Федерацин 18 субъектĕнче, çав шутра Чăваш Енре документсем хатĕрленĕ чухне граждансен тӳлевĕсен чи пысăк индексĕсене, федераци шайĕнче палăртнăскерсене, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе килĕшсе çирĕплетмелли механизмпа усă курнă.

Сергей Новиков пĕлтернĕ тăрăх – Тариф службиграждансен тӳлевĕсем çирĕплетнĕ чи пысăк индекссенчен те иртнĕ тĕслĕхсене тĕпченĕ. Çак ĕçре хайхи сăлтавлăха, вăл е ку йышăнăва мĕншĕн тунине халăха мĕнлерех ăнлантарнине те шута илнĕ.

"Ку ĕçе Раççейĕн 11 субъектĕнче "лайăх" пурнăçланă, пĕртен пĕр субъектра – Чăваш Енре – "питĕ лайăх" паллăлăх. Чăваш Республикин йышăнăвĕнче индекссен виçисене кăна мар, нумай хваттерлĕ çуртсем мĕнлереххине, вĕсене хăçан тунине, пайăр сăлтавсене, теори тĕлĕшĕнчен çавнашкал ӳсĕм пырса тивме пултаракан граждансен шутне кăтартакан цифрăсене те палăртнă", – тенĕ ФТС ертӳçи.

Чăваш Республикинче граждансем коммуналлă пулăшу ĕçĕсемшĕн хывакан тӳлев виçи кăçалхи утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен вăтамран 6,9% пысăкланассине çирĕплетнĕ. ЧР Пуçлăхĕн çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче кăларнă 65-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн граждансен ЖКХ тӳлевĕн улшăнăвĕн чи пысăк индексĕ 40,4-ран пуçласа 223,7% танлашĕ. Коммуналлă тӳлевсен виçисем улшăннине сăлтавламалли мĕн пур процедурăна вăхăтра тата уççăн иртгернĕ.

Республикăри нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансен 96,8% тĕлĕшпе тӳлев улшăнăвĕн индексĕ республика валли çирĕплетнĕ индекс "картинче" юлĕ. Ăшă энергийĕпе усă курмалли çĕнĕ нормативсене çирĕплетнĕ май 1999 çулччен тунă 1 тата 2 хутлă нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакан граждансемшĕн ăшăшăн тӳлемелли виçе пысăкланĕ. ЧР Правительстви граждансен çак категорине ЖКХ тӳлевĕсем тĕлĕшпе ятран хушма социаллă пулăшу кӳрĕ. 2014 çул валли Чăваш Ен бюджетĕнче çак тĕллевпе граждансене субсиди тӳлемешкĕн 261 млн тенкĕ пăхса хăварнă.

**К.СТЕПАНОВ**

# Ачасене халалланӑ ҫул ҫӳрев

***Ҫуллахи каникул вӗҫleниччен кун чылай-ха. Кану тапхӑрӗнче ачасем вӑхӑта мӗнле ирттернипе республикӑри влаҫ органӗсем кӑсӑкланнинчен тӗлӗнме кирлӗ мар эппин. 2012-2017 ҫулсенче Ачасен интересӗсемпе пулса пыракан наци стратегине пурнӑҫа кӗртессипе Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ ҫумӗнче ӗҫлекен координаци канашӗшӗн ку пушшех ҫивӗч те яланхи ыйту. Ҫӗртме уйӑхӗн 26-мӗшӗнче Канаш хула администрацийӗн ҫуртӗнче асӑннӑ организацин черетлӗ ларӑвӗ иртрӗ. Кун йӗркинче палӑртнӑ ыйтусене сӳтсе явма пуҫӑниччен Михаил Игнатьевпа Координаци канашӗн ытти представителӗ ачасен сывлӑха ҫирӗплетмелли «Космонавт» лагерӗнче, Канашри ачасен тата ҫул ҫитмен ҫамрӑксен социаллӑ приютӗнче пулчӗ, унти лару-тӑрупа тӗплӗн паллашрӗ.***



сap.ru сӑн ӳкерчӗкӗ

### Сывлӑх – пурнӑҫ никӗсӗ

Иккӗленместӗп: 1962 ҫултах хута кайнӑ «Космонавтӑн» тӗп тӗллевӗ ҫак каларӑшпа килӗшсе тӑрать. Ахальтен мар лагерӗн паянхи ертӳҫи Вячеслав Никитин та территорире физкультурӑпа спорта анлӑ ҫул памашкӑн тӑрӑшать. Волейбол, теннис, футбол, баскетбол лапамӗсем пур кунта. Биатлон, бильярд беседкисенчен те кун каҫипе ача татӑлмасть. Лагерӗн кашни кӗтесӗнчех ӑмӑрту шӑв-шавӗ хуҫаланать. Паллах, республика ертӳлӗхӗн пысӑк ушкӑнӗ хӑйсен кунти пурнӑҫӗпе кӑсӑкланса килсе ҫитни ачасен кӑмӑлне тата та ҫӗклерӗ.

Ҫакӑ шӑпӑрлансем Михаил Васильевич ыйтӑвӗсене хавхаланса хуравланинчен те сисӗнчӗ. Пӗри – футболла выляма, тепри дискотекӑра ташлама кӑмӑлланине каларӗ. Килшӗн тунсӑхлама пуҫланине никам та палӑртмарӗ.

Чӑн та, ҫакӑн валли сӑлтав та пулмалла мар-ха: иккӗмӗш смена 4 кун каялла кӑна уҫӑлнӑ. Пурӗ 300 ача, вӗсем республикӑн тӗрлӗ хутлӑхӗнчен: Канаш хулипе районӗсӗр пуҫне Вӑрнар, Йӗпреҫ, Комсомольски, Ҫӗрпӳ, Тӑвай, Шӑмӑршӑ тӑрӑхӗнчен, Ҫӗмӗрле, Ҫӗнӗ Шупашкар, Шупашкар хулисенчен.

Сывлӑха ҫирӗплетмелли учреждени тӗк унти апатлану та ҫитӗнекен организмшӑн юрӑхлӑ, ҫителӗклӗ пулма тивӗҫ. «Космонавтра» канакансем кунне 5 хутчен апатланаҫҫӗ. Поварсем каланӑ тӑрӑх – кӑмӑл тӑвакансене хушса та параҫҫӗ.

Тӗслӗх шайнех лартма каскамарӗ пулин те Канаш районӗн территорийӗнче вырнаҫнӑ ачасен сывлӑха ҫирӗплетмелли учрежденийӗн ӗҫ-хӗлӗпе республика ертӳҫи кӑмӑллӑ пулчӗ. «Пирӗн тӗллев – ачасен канӑвне май пур таран усӑллӑ йӗркелесси – кунта чӑннипех пурнӑҫланать», – терӗ вӑл педагогсен ушкӑнӗпе тата ачасемпе сыв пуллашнӑ май.

Канашри социаллӑ приютӑн тӗллевӗ те пархатарлӑ – пурнӑҫри йывӑр лару-тӑрӑва лекнӗ ҫул ҫитмен ачасене васкавлӑ социаллӑ пулӑшу парасси, ҫакнашкаллисен хушшинче правӑна пӑсаслӑх аталанасран сыхласси. Учреждение ашшӗ-амӑшӗн хӳтлӗхӗсӗр юлнисем, сахал тупӑшлӑ, тулли мар, йӗркеллӗ мар, нумай ачаллӑ ҫемьесенче ҫитӗнекенсем вӑхӑтлӑх вырнаҫма пултараҫҫӗ. Кама йышӑнассине вырӑнти хӑй тытӑмлӑх, опекӑпа попечительство органӗсем ҫирӗплетеҫҫӗ. Пӗр вӑхӑтра ку ҫуртра 15 арҫын ачапа 15 хӗр ача кӗтес тупма пултарать. Кӑҫал учреждение пурӗ 240 ачана социаллӑ пулӑшу кӳнӗ. Шута илнӗ «йывӑр» ҫемьесен шучӗ 162-пе танлашать.

– Урамра сап-сарӑ хӗвел ялкӑшать. Ачасене уҫӑ сывлӑша мӗншӗн илсе тухмастӑр? – ҫуртри пӑчӑлӑха тӳсме йывӑртан кӑмӑлсӑрланчӗ Михаил Игнатьев. Картишӗнчи хӑйӑр купи ҫывӑхӗнче, баскетбол лапамӗн таврашӗнче курӑк та таптанманни приютра сывӑ пурнӑҫ йӗркине хальлӗхе тивӗҫлӗ шая ҫӗклеменнине систерчӗ.

### Аслисен яваплӑхӗ ҫитмесен...

Ӗҫлӗ ҫул ҫӳревӗн тӗп пулӑмӗнче – ҫӳлерех асӑннӑ координаци канашӗн ларӑвӗнче – калаҫу ача-пӑча таврах йӗркеленчӗ. Вӗсене шкул ҫулне ҫитиччен, шкулта, хушма вӗренӳ учрежденийӗсенче пахалӑхлӑ пӗлӳ парас енӗпе пурне те уҫӑ ҫулпа тивӗҫтересси ҫинчен ЧР вӗренӳпе ҫамрӑксен политикин министрӗ Владимир Иванов тӗплӗ докладпа паллаштарчӗ. 2014 ҫулта, министр сӑмахӗпе, шкулчченхи вӗренӳ организацийӗсене ҫав ӳсӗмри ачасен 75,2 процентӗ ҫӳрет. Ҫул-йӗр карттине туллин хута ямашкӑн май килсен 2015 ҫул вӗҫленнӗ тӗле Чӑваш Енре ҫулталӑк ҫурӑран иртнӗ ачасем садик черетӗнче юлмалла мар. Шел, республикӑра хевтесӗр ачасен тӗлӗшпе татса паман ҫивӗч ыйтусем чылай-ха. Вӗсенчен пӗри – кунашкал хӑш-пӗр ача ҫӳрекен ахаль садиксенче пепкене кирлӗ условисемпе тивӗҫтерменни. Оперативлӑ информаци тӑрӑх, паянхи кун специалистсен пулӑшӑвӗ асӑннӑ категорири 1300 ачана ҫитмест.

Вячеслав Рафинов, Чӑваш Енри Ача прависемпе ӗҫлекен уполномоченнӑй, ларура хевтесӗрскерсене операци тунӑ хыҫҫӑн /сӑмахран, япӑх илтекен пепкесене/ сывӑ ачасемпе явӑҫтармалли, ҫакӑн валли специалистсем ҫирӗплетнӗ хутӑш ушкӑнсем кирли ҫинчен каларӗ. Телее, кун пек практика Шупашкарти 182-мӗш ача садӗнче пурнӑҫланма тытӑннӑ иккен.

Алла Самойлова, Чӑваш Ен сывлӑх сыхлавӗпе социаллӑ политика министрӗ, республикӑри пӗчӗк ачасен вилеслӗхӗ енӗпе лару-тӑрӑва уҫӑмлатрӗ. Лӑплантаракан хыпар – кӑҫалхи кӑрлачҫу уйӑхӗсенче пӗлтӗрхи ҫак тапхӑртинчен кӑтарту 30 процент ытла чакни. Тӗлӗнмелле пек: тулаш сӑлтавпа ҫулталӑка ҫитиччен вилнӗ ачасен социаллӑ паспортне тӗпчесен вӗсем йӗркеллӗ ҫемьесенченех пулни палӑрать. Эппин, опытлӑ ашшӗ-амӑшӗн те /ҫемьере иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш ача ҫуралсан/ пӗчӗкскерсене тимлӗхсӗр пачах хӑвармалла мар. Аслисен инкек патне илсе ҫитерекен йӑнӑшӗсенчен пӗри – пепкепе ҫуммӑн ҫывӑрни.

Сывлӑх сыхлавӗнчи сисчӗвлентерекен тепӗр ыйту – ача-пӑча аманассин кӑтартӑвӗ ӳссе пыни. Ҫул ҫитменнисем велосипедпа, ролик конькипе, скейтбордпа ярӑннӑ май ӳксе аманни час-час тӗл пулать. «Спортпа туслӑ пулни аван-ха, анчах ачасене инкекрен сыхланма та вӗрентмелле», – терӗ Алла Владимировна социаллӑ рекламӑна вӑйлатмаллине палӑртса.

Наци стратегийӗ Канаш хулинче, Шӑмӑршӑ, Вӑрнар районӗсенче мӗнле пурнӑҫа кӗрсе пынипе муниципалитет органӗсен ертӳҫисем паллаштарчӗҫ. Канашсем шкулсенче ҫамрӑк вӗрентекенсем сахаллипе аптӑраҫҫӗ. Педагогсен вӑтам ӳсӗмӗ 45 ҫул патнех кармашать-мӗн. Ҫакӑ республика ертӳҫишӗн – кӗтменлӗх: хулара педагогсен лаҫҫи вырнаҫнӑ-ҫке! /Канашри педагогика колледжӗ пирки пырать сӑмах/.

– Ертӳҫӗсен йӑрӑрах пулмалла. Хула администрацийӗн ҫамрӑксене илӗртмелли социаллӑ программӑсем ҫинчен шухӑшламалла, – палӑртрӗ ҫирӗппӗн Михаил Васильевич.

Вӑрнарсене йӗркесӗр ҫемьесен шучӗ пысӑкки пӑшӑрхантарать. Район администрацийӗн ертӳҫи Леонид Николаев ҫакӑн тӗп сӑлтавӗ алкоголь витӗмӗ пулнине пӗлсе «фанфурикссене» хирӗҫ хӑй те тӳрремӗн кӗрешме тытӑннӑ-мӗн.

Шӑмӑршӑ тӑрӑхӗнче демографи хальлӗхе малтанхиллех «уксахлать» пулин те ырӑ улшӑнусем ҫук теейӗмӗн. Районта тӑлӑхсене ҫурт-йӗрпе тивӗҫтерессипе, ашшӗ-амӑшӗн хӳтлӗхӗсӗр юлакан ачасене ҫемьене вырнаҫтарассипе тимлӗ ӗҫлеҫҫӗ.

Ларура сӗнӳсем чылай пулчӗҫ. Координаци канашӗ вӗсене шута илсе тивӗҫлӗ резолюцисем йышӑнӗ.

■ **Ирина ПУШКИНА**

*Патриотлӑх*

# Кунта чӑн хӳтӗлевҫӗ пахалӑхӗсем туптанаҫҫӗ

***Ҫитӗнекен ӑрӑва ҫарпа патриотлӑх воспитанийӗ парас тӗллевпе пуҫарнӑ «Зарница» тата «Орленок» вӑйӑсен историйӗ социализм йӑл илнӗ тапхӑртанах тытӑнать. Тӗлӗнмелле те, ҫав вӑхӑтра сарӑлнӑ чылай юхӑм пек пӑчланма мар, вӑхӑтлӑх та чарӑнман-хавшаман вӑл. Вӑйӑпа тупӑшу хӑйне евӗр пӗтӗҫӗвӗпе йӗркеленекенскер паян та ҫӳлерех асӑннӑ шухӑш-тӗллевех йӗрлет, тӑхӑмсен халалне ҫирӗп пӑхӑнса малалла ӑнтӑлма хистет.***



сap.ru сӑн ӳкерчӗкӗ

Ҫамрӑк армеецсен «Зарницӑпа» «Орленок» юхӑмӗсен республикӑри 46-мӗш финал вӑййисем Патӑрьел районӗнчи Шӑнкӑртам ҫывӑхӗнче, Хӗвеллӗ уҫланкӑра ҫӗртме уйӑхӗн 26-мӗшӗнче уҫӑлчӗҫ. Савӑнӑҫлӑ ҫак мероприятие Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев та хутшӑнчӗ. Ҫавӑн пекех уҫланкӑна палӑртнӑ вӑхӑта вӗренӳпе ҫамрӑксен политикин министрӗ Владимир Иванов, Чӑваш Республикин ҫар комиссарӗ Александр Мокрушин, Патӑрьел районӗн администраци пуҫлӑхӗ Николай Глухов килсе ҫитрӗҫ.

– Пирӗн истори паттӑрла ӗҫсемпе ҫав тери пуян. Эсир ҫӗр-шывӑн «пухмачне» тата та вӑйлатӑр. Паян ҫӗнтерни малашнехи пурнӑҫра ҫирӗп утӑмсем тума хавхалантартӑр. Паллах, савӑнӑҫ куҫҫулӗпе пӗрлех ҫак вӑйӑсен вӑхӑтӗнче куляну туйӑмӗсем те пулӗҫ. Ан пӑшӑрханӑр, вӗсем сире килес ҫул валли тата ҫирӗпрех хатӗрленме хистӗҫ. Чи кирли – ушкӑнлӑх туйӑмне ан ҫухатӑр. Ӑнӑҫу сире пурне те! – ӑмӑртӑва малалла тӑсма ҫӗкленӳлӗх кӳчӗ республика ертӳҫи.

Финал вӑййисене пурӗ пине яхӑн ача, юнармеецсен 73 отделенийӗ хутшӑнать. 5 куна пыракан мероприятисенче ҫул ҫитменнисем стройпа утассипе, алӑ вӗҫҫӗн кӗрешессипе, чӑрмавсем урлӑ иртессипе, ишессипе, автоматран перессипе тата тӗрлӗ ытти енпе тупӑшӗҫ. Вӑйӑсен программинчи 16 конкурс пӗтӗмлетӗвӗ тӑрӑх чи маттуррисене палӑртӗҫ.

Ҫамрӑксене ырӑ тӗслӗхпе аслисем мар тӑк кам хавхалантарӗ-ха? Чӑваш Ен Пуҫлӑхӗ ҫакна шута илсе хӑйне евӗр парнесемпех килнӗ иккен. Патӑрьелти пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан 1-мӗш шкулта ӗҫлекен Юрий Васюткинпа Элӗк районӗнчи педагогика ӗҫӗн ветеранӗн Геннадий Ивановӑн кӑкӑрӗсем ҫине «Раҫҫей патриочӗ» асӑнмалӑх медаль ҫакса янӑ май ҫарпа патриотлӑх воспитанийӗнче пысӑк тӳпе хывнӑшӑн тав турӗ.

■ **Ирина ИВАНОВА**

*Призыв*

# Çар тумне икĕ пин çамрăк тăхăнĕ



*Ака уйăхĕн 1-мĕшĕнчен çурхи призыв тапхăрĕ пуçланчĕ. Вăхăт вырăнта тăмасть, шав улшăнать. Кăçалхи призывниксене нумай çĕнĕлĕх кĕтет. Чăваш Республикин çар комиссарĕ Александр Мокрушин полковник çара кайма хатĕрленекенсен ыйтăвĕсене хуравлать.*

**– Кăçал пирĕн республикăри миçе çамрăк çар ретне тăрĕ?**

– Планпа килĕшÿллĕн – 2 пине яхăн.

**– Форма çинчен сăмах пуçарас тăк В.Юдашкин модельерăн тумĕсене çар çыннисем питех кăмăлламаççĕ тенине илтрĕмĕр. Мĕншĕн?**

– Юдашкин сĕннĕ çар тумĕнче лайăххинчен ытларах – япăххи. Лайăх ăста вăл, меллĕ, ăшă пултăр тенĕ ĕнтĕ, анчах пачах урăхла пулса тухнă. Çавăн пек тума тăхăннă салтак ĕçленĕ, чупнă е ытти чухне хăвăрт тарлать, лăпкă тăрсан хăвăрт шăнать. Хĕллехи вăхăтра çавăн пек тум хуçланмасть те. Çавăнпа та çар тумне çĕнĕлĕх кĕртесçĕ, вăл чăннипех ăшă, меллĕ, çăмăл пулĕ. Хальхи тумпа ĕçлекенсем малтанхинчи пĕтĕм кăлтăка пĕтерме тăрăшнă. Çĕнĕ формăна çар ретне тăракана призыв пунктĕнче тÿрех параççĕ.

**– Ытти çĕнĕлĕх пирки мĕн калама пултаратăр?**

– Манăн шухăшăмпа, чи пĕлтерĕшли – вăхăтлăх хĕсметри салтак ячĕпе унăн электрон карттипе электрон жетонĕ хатĕрлеççĕ. Карттăра унăн пĕтĕм докуменчĕ пулĕ: биометри кăтартăвĕсем, медицина картти, çар учечĕ çинчен тата ытти те. Чиплă жетон çар çыннин идентификацийĕ валли кирлĕ, çар вĕренĕвĕ вăхăтĕнче е амбулаторире медицина пулăшăвĕ пама питех те юрăхлă. Унта салтакăн мĕнле ушкăнри юн пулнине, медицинăра кирлĕ ытти информаци çырса хурĕç. Ахаль жетонсемпе танлаштарас тăк кунти информацие нимĕнле майпа та пĕтерейĕмĕн – «шывра та путмасть, вутра та çунмасть...»

Çара каякансене малашне «косметичка» та параççĕ. Унта гигиенăна пăхăнмалли пур хатĕр те пулĕ. Куç кĕскипе чĕрне касмалли пĕчĕк хачă таранах.

Ытти çĕнĕлĕх çар хĕсмечĕн саккунĕсене кĕртнĕ улшăнусемпе çыхăннă. Сăмах – кăçалхи кăрлачăн пĕрремĕшĕнчен федерацин вăя кĕнĕ çар хĕсметĕнче пулман çынсене патшалăх тата муниципалитет должноçĕсене йышăнма чарасси çинчен калакан саккун пирки.

Ансатрах каласан – хăй вăхăтĕнче салтака каяссинчен пăрăнса юлнă çын тÿре-шарара, полици тытăмĕнче, налук инспекцийĕнче, ытти патшалăх ĕçĕнче ертÿçĕ пуканне йышăнаймасть. Енчен те çавăн пек çын саккун вăя кĕриччен пĕрер пукан йышăнма ĕлкĕрнĕ тĕк, çакă çиеле тухсанах ăна ĕçрен хăтараççĕ. Ку, паллах, ытларах 27 çул тултарманнисене пырса тивет.

**– Медицина комиссийĕ витĕр тухакан çамрăкăн тата мĕн пĕлмелле? Иртнĕ çулсенче, сăмахран, ура лаппи тÿрĕ пулсан /плоскостопи/ çамрăка çара илмен. Халĕ, илтнĕ тăрăх, ун пеккисем те çара юрăхлă.**

– Çар медицина экспертизин положенине улшăнусемпе хушăмсем кĕртнĕ çĕнĕ таблицăна çирĕплетнĕ. Вĕсенчен пĕри шăпах эсир ыйтнипе çыхăннă: вăл текех çара каймасăр тăмалли сăлтав мар. Çак улшăну кăна çĕр-шывра призывниксен йышне тепĕр 30 пине çитерме май парать. Ÿт чирĕсем пирки хăшпĕр чарăва сирни тепĕр 5 пин çамрăка строя тăратма пулăшĕ.

**– Çитес çултан хĕсмет вăхăтне тăсаççĕ текен сас-хура çÿрет. Хальхи пек çултаlăк мар, çултаlăк çурă çар тумĕпе çÿреме тивет имĕш...**

– Раççей Оборона министерствин пĕр коллегийĕнче тухса каласнă чухне Владимир Путин ку ыйту тĕлĕшпе хăйĕн шухăшкăмăлне уçăмлăн палăртрĕ: хĕсмет вăхăтне тăснине вăл хирĕç. Çапла майпа призыв йĕркипе килекен çамрăк малашне те стройра çултаlăк тăрĕ. Мĕншĕн тесен эпир халĕ контрактлă çар йĕркелетпĕр.

**– Чăваш Енре çĕр-шыва хÿтĕлессине хăйĕн профессийĕ тăвас ĕмĕтлисем пур-и?**

– Пур, йышлăн та. Пĕлтĕр кăна пин ытла çынна çар чаçĕсене контракт йĕркипе ăсатрăмăр.

**– Ытларах мĕнле çарсене?**

– Пурне те.

**– Контрактник мĕн чухлĕ шалу илет? Миçе çул хĕсметре тăрать?**

– Пĕрремĕш çулах классноç тата ытти çăмăллăх çук контрактник алла 25 пин тенкĕ илет, ун хыççăн – ытларах та ытларах. Унсăр пуçне – тумтир. Патшалăх шучĕпе апатланать, общежитире е служба хваттерĕнче пурăнать, çар çыннине тивĕçлĕ çăмăллăхсем илет. Чăваш Енре çуралса ÿснĕ, халĕ Çурçĕр флотĕнче матрос тата сержант должноçĕсенчи контрактник 80 пин ытла тенкĕ илет. 10 çул хĕсметре тăни патшалăх шучĕпе хваттерлĕ пулма пулăшĕ. Чылайăшĕ хĕсметре ун хыççăн та малалла тăсать. Ку – чăн-чăн арçынсен профессийĕ...

Сăмахран, вăхăтлăх хĕсметрен таврăннă салтак е матрос /срочник/ республикăра хăйне тивĕçтерекен ĕç тупма пултарĕши? Иккĕленетĕп. Пирĕн патра шалăвăн вăтам виçи мĕн чухлĕ пулни никамшăн та вăрттăнлăх мар. Ялсенче уйрăмах. Пурнăçа йĕркелесе ярас, çемьене тăрантарас тесе шухăшлакана эпĕ контракт йĕркипе каллех çар ретне тăма сĕнĕттĕм. Паллах, кун пек чухне тăван республика кăштах çухатать: вăй питти çамрăксен йышĕ чакать-çке.

**– Ку ыйту сире, çар çыннисене, кăна мар, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсенче тăрăшакансене те пăшăрхантарать: хĕсметрен пăрăнакансем нумайланса пыраççĕ вĕт. Çапла ан пултăр тесен мĕн тумалла?**

– Çамрăкăн чунне вăл ача чухнех ху çуралнă кĕтесе, ентешсене, анлăрах каласассăн – патшалăха хÿтĕлесси кашни çамрăкăн таса тивĕçĕ пулнине çирĕплетеймесессĕн, каярахпа унăн ăнлавне улăштарма çав тери хĕн. Малтан хуларисенчен «Çара ял ачисем кайччăр...» тенине илтеттĕмĕр, халĕ ял-поселоксенчисем те çавнах калаççĕ. Пурте мар, паллах. Анчах пур. Эпир профессиллĕ çар йĕркелемесĕр те çак киревсĕрлĕхрен хăтăлаймăпăр. Ун пек таркăнсем унччен те пулнă, халĕ те пур. Малашне те пулĕç. Республикăра ун пеккисем 3 пине яхăн çамрăк. Шупашкарта – 1784.

**– Крым çурутравĕ Раççей территорийĕн йышне кĕчĕ. Апла тăк малашне унта пирĕн çар чаçĕсем пулаççех. Кăçалхи призыврисене унта яма палăртман-и?**

– Вăл урăх патшалăх çĕрĕ шутланнă чухне те пирĕн çар çыннисем унта хĕсметре тăнă. Икĕ енлĕ килĕшÿпе Хура тинĕс флотне кашни çулах 25 призывника ăсататпăр. Кăçал та çавăн чухлех пулĕ. Вĕсен йышне ÿстерме палăртман.

■ **Ю.СТЕПНОВ хатĕрленĕ**

# Тÿрĕ эфирта – Михаил Игнатьев

***Утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăвашрадион /«Чăваш Ен» ПТРК/ тÿрĕ эфирĕнче республикăра пурăнакансен ыйтăвĕсене хуравлать.***

Вырăнти влаç органĕсем граждансен çивĕч ыйтăвĕсене татса парассипе çыхăннă тухăçлă ĕçе мĕнле йĕркелемелле? Халăхăн пурнăç пахалăхне вăрахлăх программăсем пурнăçланасса кĕтмесĕр çывăх вăхăтрах лайăхлатассине мĕнрен пуçламалла? Патшалăх ЖКХри пулăшу ĕçĕсен хакĕсемпе тарифĕсене, транспорт, эмелсен, апат-çимĕç хакĕсене йĕркелесе пырас тĕлĕшпе мĕнле меслетсемпе усă курма пултарать? Çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркелесси, ĕç укçине ÿстересси, пысăк технологисене тĕпе хуракан çĕнĕ йышши медицина пулăшăвне ĕçе кĕртесси, хевтесĕр çынсене пулăшасси, пурнăç хăрушсăрлăхĕ, тавралăха сыхласси – Михаил Игнатьев ирттерекен калаçура çак ыйтусене сÿтсе явма палăртнă.

Радио итлекенсен ыйтăвĕсене малтанах утă уйăхĕн 2-мĕшĕнче 17 сехетчен çак телефонсемпе йышăнаççĕ: /8352/ 56-39-66, /8352/ 56-39-50; электрон почти: chradio@tvr.chtts.ru.

Программăна утă уйăхĕн 3-мĕшĕнче «Раççей радиовĕ» радиоканалăн регионти эфирĕнче проводлă хыпарлавăн 1-мĕш кнопки çинче е УКВ 67,04 тата УКВ 70,85 частотасемпе, çавăн пекех «Чăваш Ен» ПТРК сайтĕнче /www.chgtrk.ru/ итлĕр. 12 сехет те 10 минутра пуçланать.

■ **Н.АНДРЕЕВ**

# Шупашкарта – паллă писатель

Ĕнер Шупашкара «Родина» политика партийĕн Регионти уйрăмĕ йĕркеленипе паллă çыравçă, публицист, совет тата Раççей политика деятелĕ, общество ĕçченĕ Александр Проханов килсе çитрĕ. Александр Андреевич пирки илтмен çын çук-тăр, çапах та вулакана кĕскен унпа паллаштарни вырăнлă. Вăл 1938 çулта Тбилиси хулинче /Грузи/ çуралнă. 1960 çулта Мускав авиаци институтне пĕтернĕ, ăслăлăх тĕпчев институтĕнче инженерта ĕçленĕ. Юлашки курсра сăвăсем çырма пуçланă. 1962-1964 çулсенче – Карелире вăрманçă, Тувара геологсен партийĕсене хутшăннă.

1968 çултанпа – «Литературная газета» кăларăмра, 1970 çултанпа – асăннă хаçатăн Афганистанри, Никарагуари, Камбоджăри, Анголăри тата ытти çĕрти корреспонденчĕ. «Молодая гвардия», «Наш современник» журналсенче пичетленнĕ. 1989-1991 çулсенче – «Советская литература» журналăн тĕп редакторĕ. 1990 çулта хăйĕн хаçатне – «День» ятлăскере – кăларма пуçланă, анчах та ăна 1993 çулхи кĕркунне хупнă. Çав çулах «Завтра» хаçата регистрациленĕ. Александр Проханов – унăн тĕп редакторĕ. Паллă произведенийĕсем: «Горящие сады», «Семикнижие», «Господин Гексоген», «Поступь русской победы» тата ытти те.

Александр Проханов ĕнер Г.А.Ильенко ячĕллĕ «ЭЛАРА» АУОна çитсе курнă, Шупашкарпа паллашнă, Чăваш Республикин Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă, Наци библиотекинче вулавçăсемпе курнăçнă. Тĕплĕнрех – çитес номерте.

Паллă писатель паян тĕп хулари музейсемпе, Шупашкар районĕнчи Апашри наци культура вырăнĕсемпе паллашĕ, вырсарни кун ăна Шуршăлти Космонавтика музейĕн ĕçченĕсем йышăнĕç, кайран хăна район центрĕнчи тавра пĕлÿ музейне, ку хутлăхри Даньковсен хăна çуртне çитсе курĕ.

■ **Н.СМИРНОВА**

# Дипломпа чысланă

***"Регионсем – вĕçĕмсĕр килĕштерсе ĕçлесси" XXI курав пĕтĕмлетĕвĕ тăрăх РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмне Чăваш Ен премьер-министрĕ Иван Моторин алă пуснă Дипломпа чысланă.***

РФ Пенси фончĕн уйрăмĕн экспозицийĕсемпе Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата официаллă ытти çын, ĕçлĕ ушкăнсен представителĕсем, хула çыннисемпе унăн хăнисем – 100 пин – пырса курнă. Куравра вĕсем анлă программăпа паллашнă. Пĕрремĕш кун конференц-залра ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ЧР сывлăх сыхлавĕн социаллă аталану министрĕ Алла Самойлова тата Пенси фончĕн уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева Шупашкар хулинчи нумай ачаллă çемьесене амăшĕн капиталĕн федераци тата регион сертификачĕсене панă, пĕтĕм Раççейри "Чи лайăх страхователь – 2014" конкурс çĕнтерÿçисене чысланă. Çавăн пекех Чăваш Республикинчи предпринимательсен правине хÿтĕлекен уполномоченнăйпа Владимир Ивановпа туслă çыхăну тытмашкăн, троллейбус управленийĕпе, "Лента" АУОпа пенси палăртас енĕпе информаци электрон мелĕпе илмешкĕн Килĕшÿсем тунă. Пенсин çĕнĕ формулине тата "Пенси калькуляторĕ", "Тÿлевçĕ пÿлĕмĕ", "Интернет урлă йышăнăва çырăнасси тата документсем илме саккас парасси" сервиссене презентациленĕ. Курав кунĕсенче "Пулас пенсин мелне суйла", "Пенси счетне тĕрĕсле", "Таса шалу – тивĕçлĕ пенси", "Пенси взносĕ – предпринимательсен тупăшĕ тăрăх" акцисем йĕркеленĕ тата консультаци ирттернĕ.

Курав кунĕсенче клиентăн мобиллĕ служби ĕçленĕ – сăмах вĕççĕн 335 консультаци панă, 16 заявлени йышăннă, уйрăм специалисчĕсем ирттернĕ ыйтăма 144 çын хутшăннă.

Чăваш Енĕн тĕп куравне Пенси фончĕн уйрăмĕ саккăрмĕш çул хутшăнса çĕнĕ сервиссемпе, çитĕнÿсемпе, клиентсене пенси саккунĕсемпе паллаштармалли, партнерсемпе ĕçлĕ çыхăнусем йĕркелемелли майсемпе анлăн усă курма пултарчĕ.

■ **В.ИЛЬИНА**

*Паянхи пурнăç*

# Электрон çырăнтару: меллĕ те перекетлĕ

***«Хаçат тăрăх ырра вĕренесчĕ», – тенĕ «Хыпар» никĕслевçи Николай Никольский. Чăн та, пирĕн хушăра хаçат-журнал вулама кăмăллакан сахал мар. Халăх массăллă информаци хатĕрĕсем урлă республикăри, çĕр-шыври, тĕнчери хыпарсемпе паллашать, пултаруллă та маттур çынсем çинчен вуласа вĕсен ырă опытне ăса хывма ăнтăлать, начаррипе явăçнисене, паллах, сивлет.***







2014 çулăн II çурри валли *«Хыпара», «Çамрăксен хаçатне»* электрон мелпе çырăнса илме пулать.
*Çур çуллăх хак:* **«Хыпар» – 90 тенкĕ, «Çамрăксен хаçачĕ» – 50 тенкĕ.**

20-25 çул каялла çынсем пичет кăларăмĕсене питĕ юрататчĕç, хăшĕсем 12-15 тĕрлине те çырăнса илетчĕç. Хальхи вăхăтра та, Интернет анлăн сарăлса тата информаци сайчĕсен шучĕ пысăкланса пынă тапхăрта, почтальон хаçат-журнал валеçессе чăтăмсăррăн кĕтекенсем пур. Чăн та, кăларăмсен хакĕ парăрмаллах ÿснĕрен тата ытти сăлтавпа чылайăшĕ 1-2 тĕрлине кăна çырăнать е пачах вуламасть. Çапах редакцисенче вăй хуракансем вулакансен йышне чакарас мар тесе тĕрлĕ меслет шухăшласа кăлараççĕ. Тĕслĕхрен, хаçатăн электрон версине çырăнса илме сĕнеççĕ.

Пирĕн республикăра чи малтисенчен пĕри Çĕмĕрле район хаçачĕн редакцийĕ электрон çырăнтару йĕркелеме пуçланă: 2013 çул вĕçĕнче пуçăннă ку ĕçе. «Малалла» /«Вперед»/ хаçат эрне кунсерен 16 страницăпа чăвашла-вырăсла тухать, унăн çĕнĕ номерне çав кунах PDF-форматпа çынсене электрон почтăпа ярса параççĕ. Урăхла каласан хаçатăн тулли версине хут çинче мар, компьютер е планшет экранĕ çинче вулама май килет. Валентина Хохлова тĕп редактор пĕлтернĕ тăрăх – ку мелпе 109 çын усă курнă. «Вперед» хаçата тĕпрен илсен районта пурăнакансем электрон мелпе çырăнса илеççĕ, вĕсен хушшинче педагог нумай. Шел те, паянхи кун пичет кăларăмĕсене аякри ялсене илсе çитересси почтăшăн тăкаклă имĕш. «Интернетшăн, унпа пĕрлех пирĕн электрон хаçатшăн та, инçе çул хăрушă мар», – терĕ Валентина Михайловна. Электрон версие 2014 çулăн иккĕмĕш çурри валли 60 тенкĕпе çырăнтараççĕ. Хальлĕхе кăтартусене пĕтĕмлетмен-ха.

«Советская Чувашия» хаçатăн электрон версине предприяти-организаци ертÿçисем те, уйрăм çынсем те çырăнса илме пултараççĕ. «Хаçатăн электрон версине эпир пĕр 6 çул каяллах республика тулашĕнчи организацисене ярса пама пуçларăмăр, пĕлтĕр вара ку ĕçе Чăваш Енре те йĕркелерĕмĕр. PDF-формата виçĕ электрон адреспа ярса паратпăр. Çак мел 2013 çул питĕ анлă сарăлчĕ теме çук. Электрон çырăнтарăва малалла тăсакансем те, унпа пĕр вăхăт усă курнă хыççăн каялла хутлă вариант çине куçакансем те пур. Çавăнпа цифрăсем пĕрмай улшăнса тăраççĕ. Электрон çырăнтарăвăн лайăх енĕсенчен пĕри – хаçатшăн паян тÿлесе ыранах илсе тăма май пурри», – каласа кăтартрĕ «Советская Чувашия» хаçата çырăнтаракан уйрăм пуçлăхĕ Марина Иванова. Вăл кăларăм сайтĕнче Интернет-лавкка йĕркелеме пуçланине те палăртрĕ.

«Хыпар» Издательство çурчĕ кăларса тăракан «Хыпарпа» «Çамрăксен хаçатне» те электрон майпа çырăнса илме пулать, вĕсемшĕн çур çуллăх 90 тата 50 тенкĕ çеç тÿлемелле. «Çамрăксен хаçатне» 2014 çулхи утă-раштав уйăхĕсенче 23 çын электрон мелпе вулĕ /çĕртме уйăхĕн 26-мĕшĕнчи кăтартусем/. Дмитрий Моисеев редактор каланă тăрăх – вĕсен йышĕнче çамрăк ытларах. PDF-формата пит нумайăнах çырăнманни халăх хаçата алла тытса вулама юратнипе те çыхăннă-тăр. Унсăр пуçне хăшĕ-пĕри тин çеç пичетрен тухнă кăларăмăн хăйне евĕрлĕ шăршине кăмăлланине пытармасть. Чылайăшĕ хаçатри килĕшнĕ статьясене касса илсе пуçтарса пынине те палăртмалла.

Чăваш Ен тулашĕнче тухса тăракан чăваш хаçачĕсем те пурнăç таппинчен юлмаççĕ. «Урал сасси» хаçат сайтĕнче çапла çырнине асăрхарăм: «Хисеплĕ вулакансем! Хаçата электрон майпа çырăнса илме май пуррине те манса ан кайăр. Ун пек чухне кашни номерĕн PDF-форматне сирĕн электрон почтин адресĕпе ярса тăрăпăр». Ку кăларăм 1989 çултанпа Пушкăртстанра чăвашла тухса тăрать. Обществăпа политика хаçачĕ пулнă май пушкăрт чăвашĕсен пурнăçне, вĕсен историне, чĕлхипе культурине, йăли-йĕркине сыхласа хăварассин тата аталантарассин ыйтăвĕсене тĕплĕн çутатать. Эрнере пĕрре кун çути куракансене электрон версие 2014 çулта çырăнтарма пуçланă. «Урал сасси» редакторĕ Юрий Михайлов хальхи вăхăтра хаçата электрон майпа 25 çын вуланине пĕлтерчĕ. «Вĕсенчен ытларахăшĕ – хамăр республикăра пурăнакансем. Унсăр пуçне PDF-формата Шупашкара, Мускава, Эрĕнпура, Тутарстана, Самар облаçне ярса тăратпăр. Электрон версие çынсем хаçат тухиччен 1 кун маларах илеççĕ. Хакĕ те чылай йÿнĕрех: 160 тенкĕ, пичет кăларăмĕн – 310 тенкĕ. Çапах халăхăн ытларах пайĕ хăнăхнă мелех суйлама тăрăшать. «Урал сассин» электрон версине иккĕмĕш çур çул валли хальлĕхе 35 çын çырăннă», – терĕ Юрий Николаевич.

Тутарстанра 1993 çултанпа тухса тăракан «Сувар» хаçата та электрон мелпе çырăнса илме пулать. Çапла вара ăна Тутарстанра пурăнакансем çеç мар, унăн тулашĕнче тĕпленнĕ чăвашсем те эрне кун ирирех вулама пултараççĕ. «Унсăр пуçне эпир Интернетри социаллă сетьсенче те хамăр аккаунтсене йĕркелерĕмĕр», – палăртрĕ Константин Малышев редактор.

Электрон çырăнтару мĕншĕн меллĕрех пулнине тепĕр хут аса илер-ха. Хаçатăн электрон версийĕ почта урлă илсе тăнинчен чылай йÿнĕрех. Акă «Хыпар» хаçата кăçал утă уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа раштав уйăхĕн 31-мĕшĕччен почта урлă илсе тăрас тесен 744 тенкĕ те 12 пус тÿлемелле, электрон версишĕн вара – 90 тенкĕ. Урăхла каласан 8 хут йÿнĕрех. Çак меслете суйласа илсен «Почтальон хăçан килĕ-ши?» – тесе кĕтме тивмест. Пытарма кирлĕ мар: чылай çĕрте почта ĕçченĕсем эрнере хаçатсене 2-3 хут çеç валеçеççĕ. Паллах, пичет кăларăмĕн ĕнерхи е виçĕм кунхи номерне тĕплĕн тишкерес те килмест. Электрон версие суйласан вара çĕнĕ номер сирĕн электрон почтăна ир-ирех çитет. Çитменнине эсир хăвăр почтăна кирек хăш кĕтесре те уçса пăхма пултаратăр: çул çÿреве тухсан та, çичĕ тинĕс леш енне канма кайсан та. Килĕшнĕ статьясене принтерпа кăларма пулать. Çакна та палăртса хăварар: электрон çырăнтару йĕркелесен хаçатсене пичетленекен статьясене кăларăмсен сайчĕсенче уççăн вулама май килмĕ, урăхла каласан вĕсем PDF-архива хупăççĕ.

Пĕтĕмлетсе акă мĕн калас килет: электрон çырăнтару – меллĕ, шанчăклă, перекетлĕ те оперативлă.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

*Ырă хыпарсем*

# Текех сутмĕç

Пĕр вăхăт хăшĕ-пĕри аптекăна сипленмелли эмелсем туянма мар, мухмăр уçма сăра барне çÿренĕнех туйăнатчĕ. Сиплев учрежденийĕнчен инçех мар пушă пĕчĕк кĕленчесем йăваланнине те курма тивнĕ. Малашне çакăн пек ÿкерчĕк тавралăха килпетсĕрлетмĕ. Уйрăммăн илсен – Кÿкеç тăрăхĕнче.

Çу уйăхĕн вĕçĕнче суту-илÿ предприятийĕсемпе аптека учрежденийĕсен ертÿçисене, предпринимательсене район администрацине пухса канашланă. Ара, халăх ытларах ĕçме тытăннинче хайхи «фанфурикÿсен» витĕмĕ пысăкки каламасăрах паллăччĕ. Сутуçăсем те, сиплевçĕсем те, усламçăсем те Чăваш Республикин Хĕрарăмсен канашĕн пуçарăвне ырларĕç, районти пур ял тăрăхĕнче те спиртлă шĕвексене сутма пăрахасси çинчен ыйăшну турĕç. Канашлăва хутшăннисем меморандума пурте пĕр саслăн алă пусрĕç.

ЧР Экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илÿ министерствин эрех-сăра сутассине йĕркелесе тăракан тата пулăшу сферин пайĕн пуçлăхĕ Имма Иванова пĕлтернĕ тăрăх – ведомство Шупашкар районĕн ырă тĕслĕхне республикăри муниципалитет йĕркеленĕвĕсенче анлăрах сарма сĕннĕ.

# Пушар кăтартмĕ шар

Аслăрах ÿсĕмрисем пĕр 20-30 çул каялла кашни колхоз-совхозрах пушар сÿнтерекенсен дружини пулнине ас тăваççех ĕнтĕ. Ун чухне ялсенче те мотопомпăсем, вут-çулăма сÿнтермелли хатĕрхĕтĕр тытнă, касçхи хурала тухнă. Вăхăт иртнĕçемĕн çакă пĕтĕмпех манăçрĕ. Çав вăхăтрах «хĕрлĕ автан» ытларах та ытларах сиен кÿчĕ, чылайăшне кĕлпе кăмрăк çинче тăратса хăварчĕ.

Муркаш район администрацийĕн иртнĕ канашлăвĕнче паянхи çивĕч ыйтăва тепĕр хут çĕкленĕ. Вăхăчĕ те çапла тума хистет: юлашки вăхăтра республикăра пушарсен тата унта вилекенсен шучĕ ÿссех пырать. Муркашсем текех шăпапа выляс темен – муниципалитетра пушар хуралне йĕркелеме, çак тĕллевпе укçа-тенкĕ çителĕклĕ уйăрма палăртни çинчен хыпарлать район сайчĕ. Ял тăрăхĕсенче те пулĕç вĕсем.

■ **А.СТЕПНОВ**

*Пĕлес тенĕччĕ*

# Чĕр чун йышĕ

**«Хыпарта» республикăри сунар ресурсне кĕрекен вĕсен кайăккĕшĕкĕн кашни тĕсĕн шучĕпе паллаштартăр. Сĕтпе тăрантаракан чĕр чунсен йышне пĕлтĕрхипе танлаштарса кăтартмăр-и?**

**Н.КНЯЗЕВ.**
Елчĕк районĕ.

ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх служби вĕсене кăçалхи кăрлач-нарăс уйăхĕсенче шутларĕ, çу уйăхĕнче хисепне пĕтĕмлетрĕ. Кăçалхи кăтартăва пĕлтĕрхипе /ăна скобкăра илĕпĕр/ танлаштарар. 2014 çулта Чăваш Енре Çĕнĕр хир качаки – 85 /56/, пăши – 791 /702/, хир сысни – 1302 /1202/, хăмăр упа – 15 /14/, кашкăр – 16 /14/, ахаль тилĕ – 1724 /1941/, енот йытти – 93 /126/, пурăш – 323 /376/, ăтăр – 28 /18/, юс – 9 /15/, шашкă – 100 /77/, вăрман сăсарĕ – 612 /873/, вăрман пăсари – 53 /88/, çÿлевĕç – 9 /17/, шур мулкач – 3569 /3426/, хир мулкачĕ – 1337 /1488/, пакша – 2269 /3610/, сăвăр-байбак – 750 /796/, Европа хăнтăрĕ – 2054 /1830/ шутланнă. Ял-хула çыннисене савăнтаракан ондатра – 14966.

# Тилĕ тытма ирĕк панă

**Нумаях пулмасть «Хыпар» çу-çĕртме уйăхĕсенче республикăра кирек хăш тискер чĕр чуна та тытма юраманнине пĕлтерчĕ. Анчах çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх служби кайăкçăсене Канаш районĕнче пăшалтан персе тилĕ тытма ирĕк панă. Çакна мĕнле ăнланмалла?**

**Н.СОФРОНОВ.**
Канаш районĕ.



Ака уйăхĕн пуçламăшĕнче ветслужба сирĕн районти Малти Тукай ялĕнчи килти хуçалăхри выльăха уртаракан чир ернине лабораторире тĕпчев ирттерсе çирĕплетнĕ. Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх служби çав амак Малти Тукайри ытти килти хуçалăхра ан сарăлтăр, çынна ан ертĕр тесе çĕртме уйăхĕн 6-мĕшĕнчен Канаш районĕнчи тилĕ йышне пĕчĕклетме йышăннă. Ăна тытмалли, сунар йĕркипе килĕшекен кирек хăш меслетпе тата хатĕрпе тытма çурла уйăхĕн 6-мĕшĕччен юрать. Акарçăсем ку ĕçе хутшăнма службăран ирĕк илмелле.

■ **Владимир КУЗЮКОВ,**
**ЧР сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службин ертÿçи**



# КРИМ

шыв Р ав верс ем риминал И приговорсем

2004 çулхи кăрлачăн 17-мĕшĕнче тухма пуçланă

## Сывлăх

# Депутатсем туртмаççĕ. Ыттисем вара?




***Ыттисем пирки татса калама хĕнрех. Анчах патшалăх службинчи, халăх тарçисем шутланакан çынсен хушшинче табак туртакансен шучĕ чакса пыни куç кĕрет. Çакăнта республика ертÿçисен тĕслĕхĕн витĕмĕ те пур-тăр: Михаил Игнатьев, Иван Моторин, Юрий Попов хăйсем туртмаççĕ те...***

Çийĕнчен туртма пăрахмалли пирки ЧР Пуçлăхĕ аса илтерсех, шаккасах тăрать. Черетлĕ хут çак тема Министрсен Кабинечĕн иртнĕ ларăвĕнче çĕкленчĕ. Унта вице-премьер – сывлăх сыхлавĕн министрĕ Алла Самойлова халăх сывлăхĕ пирки хатĕрленĕ патшалăх доклачĕпе паллаштарчĕ. Сывлав органĕсен чирĕсемпе нушаланакансен вăтам шучĕ Чăваш Енре Раççейри кăтартусенчен пысăкрах иккен. Алла Владимировна иккĕленмест – çакна чи малтанах çынсем табакпа иртĕхни сăлтавлать: «Кĕрешетпĕр, анчах усси çукрах...»

Акă мĕншĕн Михаил Игнатьев патшалăх, бюджет тытăмĕсенче ĕçлекенсен хушшинче сигарет мăкăрлантаракансем нумайăйи-сахаллипе кăсăкланчĕ. Темиçе министрăн хăйсен отраслĕсемпе явап тытма тиврĕ. Чи малтанах Алла Самойлова хăй хуравларĕ: медицина учрежденийĕсен тĕп врачĕсен хушшинче туртаканнисем икĕ-виçĕ çын пур иккен. «Кĕтеселле пăрăнса вăрттăнхĕрттĕн мăкăрлантараççĕ, – пытармарĕ министр. – Паллах, вĕсен, сывлăх сыхлавĕн ĕçченĕсен, çапла тумашкăн мораль тĕлĕшĕнчен ирĕк çук».

Культура ĕçченĕсен вара çавнашкал «мораль ирĕкĕ» пур-тăр, Михаил Васильевич хăй те вĕсем пирки «пултарулăх çыннисем вĕт...» терĕ те – унашкаллисенчен чарăва çирĕп пăхăнмашкăн ыйтма та аптрамалла. Çапах культура министрĕ Вадим Ефимов çак сферăри пуçлăхсен хушшинче табак туртакансем пуррине йышăннипе пĕрлех çирĕплетме те пăхрĕ: «Ĕç вăхăтĕнче туртмаççĕ». Хуравĕ, паллах, ĕненмеллех илтĕнмерĕ те – Михаил Игнатьевăн пичĕ çинче те кулă палăрчĕ: «Эсир вĕсене пурне те курса тăратăр пуль ĕнтĕ...»

Спорт министрĕ Сергей Мельников татăклăн пĕлтерчĕ: «Пирĕн туртакансем çук». Спортшăн табак ют, урăхла пулни тĕлĕнтерĕччĕ. Вĕренÿ министрĕ Владимир Иванов тÿрĕ хуравран пăрăнчĕ теме те юрать: туртакансем чакса пыраççĕ.

Калаçу вĕçне республикăн Патшалăх Канашĕн спикерĕ Юрий Попов пăнчă лартрĕ: «Депутатсенчен тĕслĕх илĕр, парламентарисен хушшинче табак туртакан пĕр çын та çук. Хăшĕсем 30-40 çул туртнă – халĕ вĕсем те сиенлĕ çак йăларан пăрăннă».

Çапах юлашки сăмаха пур пĕр республика Пуçлăхĕ каларĕ. Унăн шухăшĕпе – табак туртни сывлăха сиенлени паллă, анчах ку çеç те мар-çке, «туртакан çын ĕç кунĕнче пĕр вунă хут пирус мăкăрлантарма утать – ĕç вăхăчĕ мĕн чухлĕ çухалать!»

Темшĕн министрсем пирки сăмах пулмарĕ. Чăн та, вĕсен хушшинче сиенлĕ йăла тыткăнĕнчи çынсем çукки пирки пĕр икĕ çул каялла сăмах пулнăччĕ. Халĕ те çаплах-ши? Унтанпа министрсен йышĕ палăрмаллах улшăнма ĕлкĕрчĕ те... Çуках пуль, Правительство çуртне, министерствăсене час-часах çÿреме тивет пулин те пирус мăкăрлантарса тăракан министра асăрханине ас тумастăп. Чăн та, Правительствăри пĕр чиновник çав-çавах туртать текен сас-хура хăлхана кĕнĕ. Пытанарах туртать теççĕ – те тĕрĕсех?

■ **Николай ДМИТРИЕВ**

## Коррупци

# Взятка – укçан тата... эрехпе

***Следстви комитечĕн республикăри управленийĕн уйрăмах пĕлтерĕшлĕ ĕçсене тĕпчекен пайĕ Федерацин пушар хурал службин судпа экспертиза учрежденийĕн республикăри пушар сăнав лабораторийĕн экс-пуçлăхĕ тĕлĕшпе харăсах тăватă уголовлă ĕç пуçарнă. Ун пирки маларах та уголовлă ĕçсем пулнăччĕ те – криминаллă досье чăннипех пуян теме юрать.***

Аса илтерер: маларах пуçарнă уголовлă ĕçсенче сăмах должноç полномочийĕсемпе киревсĕр тĕллевпе усă курни, ирĕксĕрлесе тата пысăк виçепе взятка илни пирки сăмах пыратчĕ. Вăл килĕшÿ тумасăрах тата официаллă тÿлевсĕрех хăй ертсе пыракан учрежденин вăйĕпе икĕ фирмăна пушар хăрушсăрлăхĕ тĕлĕшпе пулăшу ĕçĕсем кÿнĕ, объектсем пушар хăрушсăрлăхĕн требованийĕсене тивĕçтернине ĕнентерекен пĕтĕмлетÿсене хăех панă. Çав предприятисен ертÿçисенчен хистесех 84 пин тенкĕ укçа тата 12 кĕленче шурă эрех илнĕ. Çавăн пекех тивĕçлĕ ĕçсем пурнăçламасăрах ирĕк паракан пĕтĕмлетÿшĕн общество организацийĕн представителĕнчен 154 пин тенкĕ илнĕ. Унсăр пуçне 2012 тата 2013 çулсенче çулла хăйне пăхăнса тăракансене ĕç вăхăтĕнче Шупашкар районĕнчи коттеджĕнче ĕçлеттернĕ – строительство тата отделка ĕçĕсене пурнăçланă.

Следователь ыйтнипе «çаврăнăçуллă пушарнăя» маларахах хупса хунăччĕ. Халĕ ав тата тăватă уголовлă ĕç хушăннă. Следстви версийĕпе килĕшÿллĕн 2012-2014 çулсенче хăйĕн должноçне кура учрежденин тăватă сотрудникне премисем тата матпулăшу – пĕтĕмпе 1 млн та 150 пин тенкĕ – тÿленине пĕлнĕ май çаксене вĕсене улталанă: малашне унашкал тÿлев пулмасса пултарать тесе укçан пĕр пайне хăйне пама ыйтнă. Лешсем ĕненнĕ, хирĕçлеймен – пуçлăха 424 пин тенкĕ панă. Çавна май айăплав должноç полномочийĕсемпе киревсĕр усă курнине тата служба вырăнĕпе усă курса улталанин тата 4-шар тĕслĕхĕпе пуянланнă.

Мĕн пур уголовлă ĕçе пĕр производствăна пĕрлештернĕ, следстви пырать. СК управленийĕнче айăпланаканăн саккунсăр çак ĕç-хĕлне республика ШĔМĕн экономика хăрушсăрлăхĕн тата коррупципе кĕрешекен управленийĕн районсен пĕрлехи пайĕпе тата Федерацин хăрушсăрлăх службин Чăваш Енри управленийĕпе алла-аллăн ĕçлесе тăрă шыв çине кăларнине палăртрĕç.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

## Айăплав

# Пыйтлин – çав шухăшах

***ЧР Аслă сучĕ Канаш хулин 40 çулти арçыннине ачана мăшкăлланăшăн айăпласа приговор палăртнă. Ăна 15 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварса çирĕп режимлă колоние ăсатма йышăннă.***

Следстви комитечĕн Канашри пайĕ тата суд çирĕплетнĕ тăрăх – çак арçын хăй паллакан хĕрарăмăн ывăлне вĕлерессипе хăратса машинăпа улах вырăна, вăрман тăрăхне, илсе кайнă. Хăйĕн усал ĕçне тунă.

Çакă икĕ çул иртсен кăна ăнсăртран тăрă шыв çине тухнă темелле. Ача хăйне йĕркесĕр тытнине кура ăна ЧР ШĔМĕн çул çитменнисене вăхăтлăх усрамалли центра вырнаçтарнă. Унăн сотрудникĕсем пуçтахпа чуна уçса калаçнă та – ача хăйне шар кăтартнăскер çинчен каласа панă. Çак хыпар çийĕнчех Следстви комитетне çитнĕ, уголовлă ĕç пуçарнă.

Палăртни вырăнлă: арçын маларах та, 2000 çулта, çакнашкаллишĕнех судпа айăпланнă. Ун чухне хĕр ачана мăшкăлланă, 8 çуллăха çирĕп режимлă колоние лекнĕ. Шел, унтан ăса кĕрсе тухман. Çавна май хальхинче Аслă суд ăна вăрахлăха ирĕклĕхсĕр хăварнисĕр пуçне 10 çуллăха педагогикăра е вĕренÿ сферинчи ытти профессире, çавăн пекех социаллă хÿтлĕх, ачасемпе çамрăксен спорчĕн, çул çитменнисене явăçтаракан культурăпа искусство сферисенче ĕçлеме чарнă. Приговор вăя кĕмен-ха.

■ **К.АНТИПОВ**

● ➡ 6, 11, 12 стр.

## Пулни - иртни

# Вĕлле хурчĕ – вилĕм хурчĕ

***Вĕлле хурчĕсем пысăк йышпа сырса илнĕ май сăхнипе çын вилнĕ тĕслĕхсем пулкалаççĕ-ха, анчах кунашкалли...***

Инкек иртнĕ тунти кун Çĕрпÿ районĕнчи Хурăнвар ялĕнче пулнă. Кÿршĕ ял арçынни, 45 çултискер, ĕçлесе ĕшеннĕ хыççăн куркапа квас ĕçнĕ. Çăварĕнче тем пĕçертсе илнине тÿрех туйнă – сурса пăрахнă. Эк-кей, вĕлле хурчĕ иккен – темле майпа кваса лекнĕ. Шел, кăмăлсăрри кунпа кăна вĕçленмен. Тепĕр самантранах арçын хăрăлтатма, сывлаймасăр антăхма пуçланă.

Юнашар çынсем татах пулнă та – вĕсем çийĕнчех васкавлă медпулăшу чĕннĕ, хăйне япăх туякан арçынна хăйсен машинине лартса медиксене хирĕç кайнă. Çук, ĕлкĕреймен – çул çинче арçын вилнĕ.

■ **Д.ЯКОВЛЕВ**

КРИМ

# Ентешĕсене улталанă

***Узбекистанран Чăваш Ене килнĕ çынсем ĕçе вырнаçмашкăн кунта чылай çул пурăнакан ентешĕнчен пулăшу ыйтнă. Çаврăнăçуллă хĕрарăм вара пайта курма шут тытнă.***

17.30 «Больше, чем любовь»
18.10 Х/ф «ВАЛЕРИЙ ЧКАЛОВ»
19.50 «Романтика романса» Песни и романсы Евгения Крылатова
20.45 Константин Райкин в телеверсии спектакля театра «Сатирикон» «СИНЬОР ТОДЕРО ХОЗЯИН»
22.40 «Белая студия» Константин Райкин
23.25 Х/ф «ЭКВУС» 18+
1.40 М/ф «К Югу от Севера»

### НТВ

6.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
10.55 Кулинарный поединок 0+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.20 Своя игра 0+
14.10 Следствие вели...16+
15.00, 16.15 Т/с «УГРО-5» 16+
19.25 «Самые громкие русские сенсации» 16+
21.20 Ты не поверишь! 16+
22.00 Х/ф «ГРАЖДАНКА НАЧАЛЬНИЦА» 16+
0.00 «Остров» 16+
1.30 «Жизнь как песня. Евгений Осин» 16+
3.15 Х/ф «ЗВЕРОБОЙ» 16+
5.05 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+

### ТВЦ

5.35 Марш-бросок 12+
6.00 М/ф «Мойдодыр», «Веселая карусель»
6.30 Х/ф «МЕЖ ВЫСОКИХ ХЛЕБОВ» 6+
8.15 Православная энциклопедия 6+
8.40 Х/ф «ФИНИСТ - ЯСНЫЙ СОКОЛ»
10.00 Петровка, 38 16+
10.10, 11.45 Х/ф «БОЛЬШАЯ СЕМЬЯ»
11.30, 14.30, 0.05 События
12.30 Х/ф «СЕДЬМОЙ ЛЕПЕСТОК» 16+
14.45 «Все будет хорошо» 12+
15.15 Х/ф «ПРИШЕЛЬЦЫ В АМЕРИКЕ» 6+
16.55 Х/ф «ЗАБЫТЫЙ» 16+
21.00 «Постскриптум» с Алексеем Пушковым
22.00 «Право голоса» 16+
0.25 Х/ф «МИСС ФИШЕР» 16+
1.35 Х/ф «СИЛЬНАЯ» 16+
3.30 «Истории спасения» 16+
4.05 Линия защиты 16+
4.45 Т/ф «Великий американский хищник» 12+

### РЕН

5.00 Х/ф «ОЧЕНЬ СТРАШНОЕ КИНО-2» 16+
5.45 «Смотреть всем!» 16+
6.00 Т/с «ТУРИСТЫ» 16+
9.40 «Чистая работа» 12+
10.30 Шоу «Организация Определенных Наций» 16+
12.30 «24» 16+
13.00 «Военная тайна» с Игорем Прокопенко
15.00, 17.00 «Территория заблуждений» 16+
19.00 «Нас не оцифруешь» Концерт Михаила Задорнова 16+
20.45 Х/ф «МОНГОЛ» 16+
23.00, 4.00 Х/ф «ВОЙНА» 16+
1.30 Х/ф «ОЛИГАРХ» 16+

### Чăваш Наци телекуравĕ

06.00 “Республика” хыпарсен кăларăмĕ
06.15 «Ялан янра, чăваш сăмахĕ» /0+/
06.30 “Республика” информационная программа
06.45 «По существу» /12+/
09.00 “На Олимпе” /6+/
09.30 «Усал-тĕсел». Чăвашла куçарнă фильм /16+/
17.00 Фильмы VII Чебоксарского кинофестиваля. «Игорь Добролюбов с друзьями». Режиссер Дмитрий Михлеев /12+/
18.00 «Местное самоуправление» /12+/
18.30 «Человек рассеянный». Спектакль Русского драматического театра /12+/
20.00 «Çапла пултăр» /12+/

### Чăваш Наци радиовĕ

6.05-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.10-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.05-11.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.00-12.10 Новости. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Ӳнер тӳпинчи вĕçев. (12+) 16.00-16.10 Новости (12+) 16.30-17.00 Символ веры. (12+) 17.30-18.00 Шурăм пуç. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

### Чăваш радиовĕ

**7.10 Вести-Чувашия**
**7.23 Анонс передач**
**7.25 Паянхи кун**
**7.31 Столичный курьер**
**7.42 С нами Бог**
**7.57-8.00 Юрă çаврăмĕ**
* * *
**12.10 Жемчужина Поволжья**
**12.33 Килте пĕçерер-ха**
**12.39-13.00 Эсир юратнă юрă-кĕвĕ**
* * *
**18.10-19.00 Юрă пултăр парне. Тӳрĕ эфир**

## 6 вырсарни кун

### 1 КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Х/ф «ЧЕРНЫЙ СНЕГ» 16+
8.10 «Служу Отчизне!»
8.40 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 Фазенда
12.15 «Семь великих русских путешественников»
13.20 «Моя родословная»
14.10 «Что? Где? Когда?»
15.10 «Универсальный артист»
17.00 «Минута славы»
18.50 «Клуб Веселых и Находчивых» Высшая лига 16+
21.00 Воскресное «Время»
22.00 «Повтори!» Пародийное шоу 16+
0.15 Х/ф «ХРАБРОЕ СЕРДЦЕ» 18+
3.35 Т/с «ПРОПАВШИЙ БЕЗ ВЕСТИ» 16+
4.25 Контрольная закупка

### РОССИЯ 1

5.00 Х/ф «ДОЖДЬ В ЧУЖОМ ГОРОДЕ»
7.45 «Моя планета» представляет. «Соловки. Крепость духа»
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.25 «Свадебный генерал» 12+
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Дневник Чемпионата мира»
11.40 «Про декор»
12.40, 14.30 Т/с «ГРОМ» 12+
14.20 Местное время. Вести-Москва
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
23.45 Т/ф «Большая игра»
2.00 Х/ф «КРУГ ОБРЕЧЕННЫХ» 16+
4.05 «Планета собак»

### ЧТВ

**10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели**

### Россия К

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
10.35, 23.15 Х/ф «СВИНАРКА И ПАСТУХ»
12.00 «Легенды мирового кино» Марина Ладынина
12.25 Сказки с оркестром. Х.-К. Андерсен. «Соловей» Читает Евгения Добровольская
13.10 Гении и злодеи. Николай Блохин
13.40, 1.55 Д/ф «Дикая природа Германии». «В сердце гор»
14.30 «Пешком...» Москва студенческая
15.00 «Музыкальная кулинария. Джоаккино Россини»
15.50, 0.40 Д/ф «Тайны Большого Золотого кольца России» «Орловская земля»
16.30 «Республика песни» Концерт в Государственном Кремлевском дворце
17.40 «Искатели» «Дело Салтычихи»
18.25 XXIII церемония награждения лауреатов театральной премии «Хрустальная Турандот»
19.30 Вспоминая Николая Пастухова. «Те, с которыми я...»
20.20 Х/ф «СТАНЦИОННЫЙ СМОТРИТЕЛЬ»
21.30 Балет Джорджа Баланчина «ДРАГОЦЕННОСТИ» в постановке Парижской оперы. Солисты Ульяна Лопаткина, Игорь Зеленский, Андриан Фадеев
1.20 М/ф «Кот в сапогах» «Приливы туда-сюда»

### НТВ

6.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
8.10 «Русское лото плюс» 0+
8.45 Их нравы 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Чудо техники» 12+
10.55 Кремлевские жены 16+
12.00 «Дачный ответ» 0+
13.20 Своя игра 0+
14.10 Следствие вели...16+
15.00, 16.15 Т/с «УГРО-5» 16+
19.25 Х/ф «ГРЯЗНАЯ РАБОТА» 16+
23.00 Х/ф «РОДСТВЕННИК» 16+
0.55 «Школа злословия» Юлий Гуголев 16+
1.45 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
2.40 Авиаторы 12+
3.10 Х/ф «ЗВЕРОБОЙ» 16+
5.00 Т/с «МОСКВА. ТРИ ВОКЗАЛА» 16+

### ТВЦ

5.25 Х/ф «ФИНИСТ - ЯСНЫЙ СОКОЛ»
6.40 М/ф «Лебеди Непрядвы», «Привет Мартышке», «Шайбу, Шайбу!»
7.35 «Фактор жизни» 6+
8.10 Т/с «МАМОЧКИ» 16+
10.05 «Барышня и кулинар» 6+
10.40 Д/ф «Последняя весна Николая Еременко» 12+
11.30, 23.55 События
11.45 Х/ф «ИНСПЕКТОР УГОЛОВНОГО РОЗЫСКА»
13.35 «Смех с доставкой на дом» 12+
14.20 Олег Чернов в программе «Приглашает Борис Ноткин» 12+
14.50 Московская неделя
15.20 Т/с «ПОХОЖДЕНИЯ НОТАРИУСА НЕГЛИНЦЕВА» 12+
17.20 Х/ф «АНЮТИНО СЧАСТЬЕ» 12+
21.00 «В центре событий»
22.00 Х/ф «ИНСПЕКТОР ЛИНЛИ» 12+
0.15 Х/ф «ЛИЧНЫЙ НОМЕР» 12+
2.20 Х/ф «У ОПАСНОЙ ЧЕРТЫ»
4.20 Д/ф «Олег Даль - между прошлым и будущим» 12+
5.10 Т/ф «Мегалания: воскрешение гигантского убийцы» 12+

### РЕН

5.00 Х/ф «ВОЙНА» 16+
6.20 Х/ф «МОНГОЛ» 16+
8.30 «Нас не оцифруешь» Концерт Михаила Задорнова 16+
10.30 «День «Секретных территорий» «Пиршество разума» 16+
11.30 «День «Секретных территорий» «Тайна вредного мира» 16+
13.30 «День «Секретных территорий» «Всем смертям назло» 16+
14.30 «День «Секретных территорий» «Звездолет для фараона» 16+
15.30 «День «Секретных территорий» «Анатомия чудес» 16+
17.30 «День «Секретных территорий» «Вселенная на ладони» 16+
18.30 «День «Секретных территорий» «Планета обезьяны» 16+
19.30 «День «Секретных территорий» «Приключения древних существ» 16+
21.30 День Секретных территорий «Боги подводных глубин» 16+
22.30 «День «Секретных территорий» «Ложная история» 16+
0.30 Х/ф «ПОД ОТКОС» 16+
2.10 Х/ф «ЖУТКО ГРОМКО И ЗАПРЕДЕЛЬНО БЛИЗКО» 16+
4.30 Т/с «ВОВОЧКА-4» 16+

### Чăваш Наци телекуравĕ

09.00 «Кулăш королĕ». Чăвашла куçарнă фильм /12+/
13.30 «Вячеслав Христофоровăн пултарулăх каçĕ» /0+/
17.00 «Çĕр тивлечĕ» /12+/
17.30 «Всечувашский праздник Акатуй» /0+/
18.30 «Казачья застава» фолк-дискотека /6+/
19.30 «Бухты барахты» /6+/
20.00 «Комфортный город» /12+/
20.30 «Наобум» /12+/

### Чăваш Наци радиовĕ

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 15.05-15.30, 18.05-18.30, 20.05-20.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.30-8.00 Символ веры. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 16.10-16.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Социальный вопрос. (12+) 16.30-17.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 17.10-18.00 Чунлă эфир. (12+) 18.30-19.00 Радиовулав. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.30-21.00 Шурăмпуç. (12+) 21.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

### Чăваш радиовĕ

**7.10 Анонс передач**
**7.17 Паянхи кун**
**7.21 Столичный курьер**
**7.34 Здоровье**
**7.44 Сан яту-вĕрентекен**
**7.55-8.00 Юрă çаврăмĕ**
* * *
**8.00-9.00 Между Волгой и Уралом**
* * *
**12.10-13.00 Мехел. Гала-концерт**
* * *
**18.10 Ылтăн çӳпçерен**
**18.48-19.00 Приглашение к диалогу**











*Чунри*

# Пуррине – упрамалла











Халăх пултарулăхĕн Пĕтĕм Раççейри "Раççей çăл куçĕсем" фестивалĕ – Республика кунĕн тĕп саманчĕсенчен пĕри. Çирĕм иккĕмĕш хут иртрĕ вăл Чăваш Енре. Пĕрремĕшне уявлани те куç умĕнчех-ха. Çак "çăл куçа" йĕркелекенсем виçĕ регионти халăх пултарулăхĕн хастарĕсем пулчĕç. Ун чухне фестиваль "Атăлçи çăл куçĕсем" ятпаччĕ. Вăл наччасрах анлă Атăл пек мăнаçланса кайрĕ, хăйĕн техĕмлĕ "шывĕпе" чунăмăрсене канăç кӳчĕ. Раççейри, Никама Пăхăнман Патшалăхсен Пĕрлĕхĕнчи халăх пултарулăх коллективĕсем çеç мар, чикĕ леш енчен те килме пуçларĕç Авалхи пăлхар тăхăмĕсем патне. Тĕрлĕ çулта фестивале АПШ, Турци, Египет, Германи, Эстони, Итали, Словаки, Намиби, Беларуç тата ытти çĕр-шыв ансамблĕсем хутшăннă.

Кăçалхинче, çирĕм иккĕмĕшĕнче, Шупашкарăн тĕп тӳремĕнче чăваш ташшине Раççейĕн 30 регионĕнчи тата Чăваш Енри 49 коллектив /унта çĕр-шыври, тĕнчери 100 ытла халăх çынни хутшăнчĕ/ ташларĕ! Кун пеккине тата ăçта курма пулĕ? Пĕтĕм чăвашсен Акатуйĕ те иккĕмĕш хут кĕрлесе иртрĕ ватă Шупашкарăмăрта. Кăçал вăл Хĕрлĕ тӳреме çитрĕ. Çакă – хăйне евĕрлĕ çитĕнӳ. Çĕрпе суха туйне хальхинче Раççейри тата республикăри 50 ытла коллектив /1000 çын ытла/ хутшăнчĕ.

Çав вăхăтрах Наци музейĕн картишĕнче декораципе хушма искусствăн "Руç ăстисем" вун иккĕмĕш конкурсĕ иртрĕ. Унта вара 53 ал ĕç ăсти 13 регионтан тата Чăваш Енрен пуçтарăннă. Çĕнтерӳçи – Иваново пики Любовь Степанова – хăйĕн "Телей кайăкне" вырăс тата чăваш çĕввисемпе илемлетсе халăхсен туслăхне халалланă.

Республика кунĕпе çыхăнтарнă мероприятисен хушшинче пуçласа тĕл пулаканнисем те сахал марччĕ. Эпир халĕччен ачасен Акатуйне ирттерменччĕ. Паллах, вăл аслисен пуçарăвĕпе, кĕçĕн çултисене хистесе явăçтарнипе тунăскер пулĕ-ха. Çапах та пĕлтерĕшĕ вышкайсăр пысăк: çитĕнекен ăрăва иртнĕ кун-çулăмăр пирки аса илтернипе, аваллăхри йăла-йĕркене çывăхлатнипе, ача-пăча фольклорне чĕртсе тăратма ăнтăлнипе. Пĕлччĕр паянхи шăпăрлансем вĕсен ашшĕ-амăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ мĕн юрласа, выляса, ташласа çитĕннине. Килĕшет тĕк – малалла тăсчăр.

Кăçал Шупашкара "МузЭнергоТур" фестиваль-гастролер пуçласа кĕрсе тухрĕ. Раççейри, Испанири, Португалири, Швейцарири, Италири, Арменири хальхи вăхăтри 19 музыкантăн произведенийĕсен программи авалхи фольклор теминчен пуçласа авангард таранах пулчĕ. Раççей халăхĕсен йăли-йĕркисемпе традицийĕсен "Фолкстейшн-Чебоксары" фестивалĕ те Республика кунĕн уяв программинче пурччĕ. Раççейĕн сакăр хутлăхĕнчи 13 этноушкăн пултарулăхĕпе паллаштарчĕ.

Республика кунĕпе çыхăннă мероприятисем вĕçленсе пыраççĕ, пĕтĕмлетӳсем тума та вăхăт. Анчах ыйту çуралать: мĕнле виçепе пахаламалла-ха? Халăхăн туйăмне тĕрĕс палăртма пултаракан хатĕр пур-и?

"Раççей çăл куçĕсем" фестивале хутшăннисем те, "Руç ăстисем" конкурса килнисем те, Пĕтĕм чăвашсен Акатуйне пуçтарăннисем те Шупашкарпа киленнине, вăл хăтлă, илемлĕ, таса пулнишĕн кăмăллине пĕлтерчĕç. Хăнасем пирĕн хулана килĕштернишĕн эпир те хĕпĕртетпĕр. Çакă – хамăра хакланиех-çке. Манса каяр мар: яланах çапла пулман Шупашкар, çак илем тӳперен вĕççе анман. Вăл пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине хамăр куçпа курса тăтăмăр.

Çак кунсенче тĕп хулара иртнĕ мероприятисене ятарласа ятран палăртса тухрăм. Унта шăраннă юрăсене, кĕвĕ-çемĕсене укçа çине куçарма нимĕнле сум та çитмĕ. Чун-чĕре, ăс-хакăл, кăмăл-сипет енĕпе çыхăннă ĕçсем – вилĕмсĕр, яланлăхах. Пирĕн тĕллев ансат: мĕн пуррине упрамалла тата малалла ăнтăлмалла. Вара эпир этемле – ыттисене тĕлĕнтермелле, ăмсантармалла – пурăнăпăр. Хамăр та, паллах, киленӳ тупăпăр.

**Надежда СМИРНОВА**







Геннадий ВЕРБЛЮДОВ тата cap.ru сайтĕнчи сăн ӳкерчĕкĕсем

КРИМ

## Хӳреллĕ туссем

# Ку хурал тĕлĕрместех



*Уголовлă айăплава пурнăçлакан тытăмăн кинологи служби 105 çул тултарчĕ. 1909 çулхи çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнче Раççей шалти ĕçсен министрĕ Петр Столыпин статс-секретарь пуçарнипе Санкт-Петербургра полици йыттисен пирвайхи питомникне тата дрессировщиксен шкулне уçнă.*

Кинологи службин пĕлтерĕшне, çак подразделени ят-сумне çĕклес, çирĕпленнĕ йăласене малалла аталантарас, çамрăк сотрудниксене суйласа илнĕ профессие парăнса ĕçлеме хавхалантарас тĕллевпе Раççей ФСИНĕн хушăвĕпе асăннă куна УИСăн Кинологи службин кунĕ тесе пĕлтернĕ.

Чăваш Енри тĕрме-колони хуралĕ те йытăсен пулăшăвĕпе анлăн усă курать. ФСИНăн республикăри управленийĕн кинологи службинче хурал тата дежурнăй сменăсенче 128 кинолог ĕçлет. Тата – 215 служба йытти. Управлени ертӳçисем палăртнă тăрăх – кинологсем хăйсен хӳреллĕ тусĕсем пулăшнипе транспорт хатĕрĕсене тĕплĕ тĕрĕслеççĕ, сыхлакан объектсен çын çӳреме юраман шалти зонисене хуралласçĕ, таркăнсене, наркотиксене, психотроплă тата взрыв хатĕрĕсене, хĕçпăшал шыраççĕ, оперативлă шырав тата режимпа профилактика мероприятийĕсене хутшăнаççĕ.

Хăйсен йыттисем пирки каласа памалли кашни кинологăнах пур. Пакунлă çынсем вĕсене тусĕсен вырăннех хураççĕ, хаçат корреспонденчĕпе калаçнă май хăшĕсем йытăсем пирки «çемье членĕсем пекех» тени те пулчĕ. Кашнин – тĕрлĕ характер, хăйне евĕрлĕ пултарулăх, çавна май йытăсемпе ĕçлемешкĕн тӳсĕмлĕх те кирлĕ, психологи саманчĕсене те шута илмелле. Тимлĕ пулсан вара йытă çакна ырăпа тавăрать.

Кинологи службин кунне халалласа ФСИН управленийĕнче савăнăçлă пуху иртрĕ. Унта Чăваш Енĕн тĕрлĕ кĕтесĕнче вырнаçнă юсанмалли мĕн пур учреждени кинологĕсем пухăнчĕç. Управлени пуçлăхĕн çумĕ Юрий Смирнов пурне те тав туса саламларĕ. Паллах, служба йыттисем пирки те ăшă сăмах нумай пулчĕ – вĕсем çакна тивĕç, уголовлă айăплава пурнăçлакан тытăмра ырми-канми ĕçлеççĕ-çке. Хурал пирки тепĕр чух «çывăрать, тĕлĕрет» теме пăхаççĕ, ку хурал тĕлĕрмест – кун пирки иккĕленӳ çук. Наградăсем те пулчĕç. Шел, йытăсене çак уява илсе килме май пулман, анчах кинологсем тивĕçнĕ наградăсенче вĕсен тӳпи те пысăкки куç кĕрет.

**Дмитрий НИКОЛАЕВ**

## Ыйту-хурав

### Справка ыйтаççĕ

**Аслă шкул пĕтеретĕп – вĕрентекен пулатăп. Ăçта ĕçлесси те паллă, анчах кадрсен пайĕнче манран ытти документпа пĕрлех судпа айăпланманнине çирĕплетекен справка та ыйтрĕç. Пĕлтерсемĕр, çав справкăна ăçтан илмелле?**

**Сергей ДМИТРИЕВ.**
Канаш районĕ.

Ыйтăва **ЧР Шалти ĕçсен министерствин Информаци центрĕн пуçлăхĕ Николай Гусев** хуравларĕ:

– Судпа айăпланманни /айăпланни/ çинчен калакан справка пулас вĕрентекенсене кăна мар, патшалăх тата муниципалитет органĕсене ĕçе вырнаçакансене те кирлĕ. Çавнашкал справкăна ЧР ШĔМĕн информаци центрĕнче çак адреспа илме пулать: Шупашкар хули, Карл Маркс урамĕ, 41 çурт /Кооператив урамĕ енчен, Ленин районĕн шалти ĕçсен пайĕ пулнă çуртра/. Е – Раççей ШĔМĕн пурăнакан вырăнти район шайĕнчи территори органĕнче. Заявленисене тунти кунсерен /уйăхăн кашни виççĕмĕш тунти кунĕ – профилактика кунĕ/, юн кунсерен тата эрне кунсерен 8 сехетрен пуçласа 17 сехетчен /апат вăхăчĕ – 12-рен тытăнса 13 сехетчен/, çавăн пекех уйăхăн 1-мĕш шăмат кунĕнче 9-тан пуçласа 13 сехетчен йышăнаççĕ. Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 24-11-52, 24-14-22.

Гражданинран паспорт тата унăн копийĕ çеç кирлĕ. Справкăна патшалăх пошлинине е урăх тӳлев илмесĕрех параççĕ. Вăхăт – 30 кун таран.

Интернетпа çыхăнма пултаракан граждансене хăвăрт документ çаврăнăшĕн меллĕ майĕсемпе усă курма сĕнетпĕр. Кирлĕ пулăшу ĕçĕпе вăхăта сая ямасăрах усă курма пулать. Пĕр хут www.gosuslugi.ru сайтра регистрациленмелле кăна – порталăн мĕн пур пулăшу ĕçĕ уçăлать. Çав шутра – Раççей ШĔМĕ кӳрекеннисем те.

Асăннă справкăна Патшалăхăн пулăшу ĕçĕсен порталĕ урлă илме чăннипех меллĕ. Справкăна хăвăртрах туса параççĕ – 10 кун таран. Иккĕмĕшĕнчен, заявление килтен тухмасăрах параятăр. Тепĕр самант: справка хатĕрри çинчен сире хăвăрăн электрон почтин адресĕпе е «уйрăм кабинета» пĕлтереççĕ. Чи кирли вара – вăхăт перекетленни: патшалăх органĕсене темиçе хут кайма тивмест, Информаци центрне хатĕр документа илме кăна каятăр.

### Пĕлтерме тивĕç

**Ывăла судпа айăпласа 5 çуллăха çирĕп режимлă колоние хупрĕç. Вăхăт чылай иртрĕ, анчах вăл халĕччен те пĕрре те шăнкăравламарĕ, çыру та илмерĕмĕр. Вăл ăçтине те пĕлместĕп. Ăна тупма пулăшсамăр. Колони судпа айăпланнă çын ăçти пирки унăн тăванĕсене пĕлтерме тивĕç-и?**

**Г.НИКОЛАЕВА.**
Улатăр хули.

Ыйтăва хуравлама **ЧР юсанмалли учрежденисенче саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан Шупашкар прокурорĕнчен Александр Зотовран** ыйтрăмăр:

– Айăпланнă çын айăплав вăхăтне ирттермелли вырăна çитни çинчен юсанмалли учреждени е айăплава пурнăçлакан орган администрацийĕн РФ УИКĕн 17 статйипе килĕшӳллĕн вăл çитнĕ хыççăн 10 кунран кая юлмасăр айăпланнă çын хăй суйласа илнине тĕпе хурса унăн тăванĕсенчен пĕрне уведомлени ямалла. Енчен те сирĕн юсанмалли учрежденире ывăлăрăн прависене пăсни çинчен калакан информаци пур тăк – прокуратурăн «хĕрӳ лини» телефонĕпе шăнкăравлама пултаратăр – 62-56-80 /Александр Павлович Зотов/.

### Номерĕн – хăйĕн вырăнĕ

**Автомобилĕн регистраци номерне машинăн малти кантăкĕ çине вырнаçтарнă, вăл лайăх вуланать пулсан мана çакăншăн административлă майпа явап тыттарни саккунлă-и?**

**Игорь Е.**
Тăвай районĕ.

– Саккунлă, – терĕ **Тăвай районĕн прокурорĕ Оксана Ястребова.** – Регистраци паллисĕр транспорт хатĕрĕпе çӳренĕшĕн, номере ун валли ятарласа палăртман вырăнта вырнаçтарнăшăн, çавăн пекех номере вулама чăрмантаракан материалсемпе усă курнăшăн РФ КоАПĕн 12.2 статйин 2-мĕш пайĕпе административлă яваплăх палăртнă.

Раççей Аслă сучĕн пленумĕн 09.02.2012 ç. кăларнă 2-мĕш йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн çыннăн ĕçĕсене адмкодексăн 12.2 статйин 2-мĕш пайĕпе хакланă чухне çакна тĕпе хумалла: административлă правăна пăснин çак тĕслĕхĕн объективлă енĕсем патшалăхăн регистраци палли пур чухне ăна патшалăх стандарчĕн требованийĕсене пăхăнмасăр çакăн валли палăртман вырăна вырнаçтарнине пырса тивеççĕ.

### Паллашма ирĕк пур, анчах...

**Прокуратурăна ыйту çырса патăм, ун тăрăх ирттернĕ тĕрĕслев кăтартăвĕсем пирки хурав илтĕм. Анчах эпĕ прокурор тĕрĕслевĕн материалĕсемпе паллашма пултаратăп-и, унашкал йĕрке пур-и?**

**Ю.ИВАНОВ.**

Çыру ăçтан пулни паллă мар та – унăн хуравне те **Оксана Ястребова прокурортанах** ыйтрăмăр.

– Федерацин 02.07.2013 ç. кăларнă саккунĕпе «Раççей Федерацийĕн прокуратури çинчен» саккунне 4-мĕш пункт хушнă, – пĕлтерчĕ Оксана Геннадьевна, – унпа килĕшӳллĕн гражданин тĕрĕслев материалĕсемпе пĕрле çав материалсене производствăна йышăннă прокурор е унран аслăрах прокурор ирĕк панипе паллашма пултарать. Паллах, сăмах çав çын прависемпе ирĕкĕсене тӳрремĕнех пырса тивекен материалсем пирки кăна пырать.

Патшалăх вăрттăнлăхĕ е саккун сыхлакан ытти вăрттăнлăх шутланакан кăтартусем пур материалсене граждансене паллашма памаççĕ.

Материалсене гражданина паллашма парасси е çапла тума сăлтавласа хирĕçлесси çинчен калакан йышăнăва гражданин ыйтса çырнă хыççăн 10 кунран кая юлмасăр тумалла. Паллашма ирĕк паман чухне гражданина çак йышăну тĕлĕшпе аслăрах прокурор ячĕпе е суда çăхав çырма ирĕк пуррине ăнлантармалла.

**Н.СТЕПАНОВ ыйтса пĕлнĕ**

## Кĕскен

### Пиçиххипе – юрамасть!

**64 çулти К. тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе суда ярса патăмăр. Çаксккер мăнукне хĕненĕ.**

Ӳсĕр пулнă та – 4 çулти мăнукĕ кутăнлашни, çăвăнасшăн пулманни килĕшмен. К. пĕчĕкскере пластмасса теттепе, хĕçпе, купарчинчен икĕ хут çапнă. Ача ахăрттарсах йĕрсе янă та – ватă çынна ку пушшех тарăхтарнă. Пиçиххипе юнтармăша купарчинчен виçĕ хут çапнă.

«Воспитани йĕрĕсене» – кăвакарнă вырăнсене – пĕчĕкскерĕн амăшĕ асăрханă, çакăн çинчен çийĕнчех полицие пĕлтернĕ. Ăс памалли авалхи меслетпе усă курнине арçыннăн мăшăрĕ, хĕрĕ, ача сачĕн воспитателĕсем те сивленĕ. К. хăй те айăпне йышăнать, ӳкĕнет. Ĕçме те пăрахнă теççĕ. Чăн та, тӳрре тухма тăнă: пĕчĕк чух ăна та аслашшĕ çирĕп тытнă, алă çĕклеме те именмен-мĕн, çавăнпа йĕркеллĕ çын пулса ӳснĕ. Анчах суд ăна тӳрре кăларасси иккĕленӳллĕ. Пиçиххипе хĕç те уголовлă ĕç материалĕсемпе пĕрлех вĕт.

### Шăнкăртатса юхать... сăмакун

**Шупашкар районĕн сучĕ нумаях пулмасть Ростислав Григорьев тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерчĕ. 57 çулти арçын сăмакун сутнăшăн суд умне тăчĕ.**

Кăçалхи ака уйăхĕнче каçхине вăл хăйĕнпе пĕр ялтах пурăнакан арçынна 219 грамм сăмакун сутнă – 100 тенкĕлле. Полици çав кĕленчене туртса илсе экспертизăна янă. Хăватлă шĕвек – 88,9%, анчах унта наркăмăшлă хутăшсем, çын пурнăçĕпе сывлăхĕшĕн сиенлĕскерсем, пурри палăрнă.

Судра Григорьев айăпне йышăнса ӳкĕнчĕ. Анчах явап тытмаллах: суд ăна çын пурнăçĕпе сывлăхĕн хăрушсăрлăхĕн требованийĕсене тивĕçтермен спиртлă продукци хатĕрлесе сутнăшăн айăпласа 300 сехет обязательнăй йĕркепе ĕçлеттермелли приговор палăртрĕ.

### Сăмсасăр юлнă

**Çак тĕслĕхре шар курнă çынна пушшех хĕрхенес килет: чăннипех сăмсасăр юлнă вĕт!**

Пермь хулинче пурăнакан, грузовикпе инçе çул çӳрекен Олег Кустов çав кун Шупашкар районĕнчи «Мотель М-7» автостоянка территорийĕнче чарăннă. Ун пеккисем кунта татах пур – тепĕр дальнобойщикпе, Мускав облаçĕн 45 çулти арçыннипе, пĕрле каннă. Халĕччен пĕр-пĕрне палламан, анчах эрех туслаштарать вĕт. Тата – хирĕçтерет.

Ку тĕслĕхре те çапла пулса тухнă. Черкке çĕклесе çывăхланнăскерсем тепĕр самантран хирĕçсе-тытăçсах кайнă. Çапăçнă вăхăтра Кустов водителе сăмсинчен çыртнă – пĕр пайне татса илмеллех.

...Ирхине суранлă водитель Мускав облаçне çул тытнă. Сăмса татăкне следователе парса хăварнă – Кустов айăпне ĕнентермелли «улика» вĕт.

Олег кĕçех суд умне тăрĕ – айăплав пĕтĕмлетĕвне çирĕплетрĕмĕр ĕнтĕ. Вăл çын сывлăхне йывăр сиен кӳнĕшĕн УК 111 статйин 1-мĕш пайĕпе явап тытать.

**Анатолий ИВАНОВ,**
**Шупашкар районĕн прокурорĕн çумĕ**

● ➡ *12 стр.*

КРИМ

*Ултав*

# Унчченхи приговор урок пулайман



***Чĕмпĕр çынни çакнашкаллишĕнех, Шупашкарта тунă преступленишĕн, маларах та полици аллине çакланнă. Суд умне тăнă, анчах ку уншăн урок пулман иккен.***

Çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче, Республика кунĕнче, Шупашкар заливĕнчи киоск патне пĕр арçын пынă. Вăл сутуçăран 5 пин тенкĕлĕх банкнота вакласа пама ыйтнă. Лешĕ ăна укçа тыттарсан вара арçын шухăшне улăштарнă, вак купюрăсене сутуçа каялла тавăрса панă. Уяв кунĕнче заливра халăх йышлă, арçын çакна шута илсе сутуçă тимлĕ пулмасса шаннă-тăр. Анчах çакă тӳрре тухман. Хĕр арçын тавăрса панă укçа тĕркине тепĕр хут шутланă, темиçе купюра çитменнине палăртнă. Вĕсене ултавçă вăрттăн хĕстерсе юлнă.

Сутуçă çийĕнчех шăв-шав çĕкленĕ. Республика кунĕнче кунта полицейскисем йышлă, çавна май пакунлисем самантрах киоск патне пынă. Ултавçа кĕçех тытса чарнă. Кӳршĕ облаçăн тĕп хулин 38 çулти арçынни йăкăртнă укçана тăкакласа та ĕлкĕреймен – çумĕнчех.

ШĔМĕн тĕп хулари управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх – хальлĕхе тĕрĕслев пырать. Уголовлă ĕç пуçараççех-тĕр. Иккĕмĕш хут çакланнă та – хальхинче айăплав та çирĕпрех пулассăн туйăнать.

Çакнашкал мелпе арçынсем кăна усă курмаççĕ иккен, «çăмăл алăллă» хĕрарăмсем те пур. Полици Шупашкартах пулнă тепĕр тĕслĕхе уçăмлатас енĕпе ĕçлет. Граждан урамĕнчи лавккара пĕр хĕрарăм /сăн ӳкерчĕкре/ сигарет кăна туяннă, уншăн 5 пин тенкĕлĕх купюрăпа тӳленĕ. Кассир «ытлашши» укçана вак купюрăсемпе тавăрса панă. Анчах тавар туянакан хăйĕн çумра пĕчĕкрех банкнот пулнине аса илнĕ те – сигаретшăн унпа тӳлес тенĕ. Кассир тыттарнă купюрăсене тавăрса панă чух вара тĕркемĕн пĕр пайне вăрттăн хĕстерсе юлнă иккен – 2 пин тенкĕ йăкăртнă. Шел те, лавкка ĕçченĕ çакна чикан сăнлă хĕрарăм тухса кайсан кăна ăнланса илнĕ. Ултавçа шыраççĕ.

Шалти ĕçсен министерстви вара асăрхаттарать: укçапа тимлĕ пулăр – асăннă йышши тĕслĕхсем республикăра çине-çинех. Палламан-туман çынсене укçа вакласа ан парăр, таваршăн пысăк укçапа тӳленĕ тĕслĕхсенче тавар туянакан умĕнчех укçана лайăх шутлăр, пысăк купюрăсене тимлĕ пăхăр.

■ **К.АНТОНОВ**

# Ватă çынна сулăхнă та...

***Ултавлă çак ĕç-пуç тата хăçанччен тăсăлатчĕ-ши – калама та хĕн. Юрать-ха, ватă çынна пĕлĕшĕсем полицие кайма ӳкĕте кĕртнĕ.***

Тĕп хулан шалти ĕçсен управленине Шупашкарта пурăнакан 74 çулти мучи килнĕ. Унăн историйĕ ыттисемшĕн асăрханма хистекен тĕслĕх пулма тивĕç. Икĕ çул каялла вăл алăран БАД текен темле эмелсем туяннă – 45 пин тенкĕ тӳленĕ. Кун хыççăн вара такамсем, хăйсем пирки банк ĕçченĕсем текенскерсем, ун патне вĕçĕмсĕр шăнкăравлама тытăннă: хаклă эмелшĕн саплаштару укçи тӳлеме шантараççĕ. Анчах çавăншăн каллех укça тӳлемелле иккен – 30 пинрен пуçласа 100 пин тенкĕ таранах.

Ватăсем çынна шанаççĕ вĕт. Çак мучи те шаннă. 2012 çулхи кăрлачран тытăнса кăçалхи çĕртме уйăхĕччен пенсионер паллă мар çынсене 200 пин тенкĕ патнелле куçарса панă. Тӳлев пуласса шанса, тен, татах та куçаратчĕ пуль, телее, пĕлĕшĕсем хушша кĕнĕ, хистесех пакунлисем патне янă. Шалти ĕçсен пайĕ ĕç-пуçа тĕпчет.

Çийĕнчен йĕркелĕх хуралçисем граждансене черетлĕ хут асăрханullă пулма сĕнеççĕ. Пысăк тӳлев шантарса укçа куçарма ыйтаççĕ тĕк – ан ĕненĕр. Банксен сотрудникĕсем хăйсен клиенчĕсенчен телефонпа укça куçарма ыйтмаççĕ. Ку – ултавçăсем усă куракан меслет. Иккĕленӳ çуратакан çынсем, шăнкăравсем пирки çийĕнчех полицие евитлеме ан ӳркенĕр.

■ **Н.АНТИПОВ**

# Сăмах çерçи мар

«Следстви çирĕплетнĕ тăрăх – тава тивĕçлĕ артиста ресторанта тивĕçлипех хĕненĕ».

***Уголовлă ĕç материалĕсенчен.***

«Эпĕ вăраннă чух çамрăк çын çукчĕ ĕнтĕ. Унпа пĕрлех манăн ылтăн хăлха çакки, вăчăра çухалнă... Хама тепĕр хут мухтаса илтĕм: çĕрлех, дискотекăра паллашнă каччăпа пĕрле хваттере таврăнсан, унăн пиншакĕн кĕсйинчен енчĕкĕпе паспортне вăрттăн кăларса илсе питĕ тĕрĕс турăм».

***Шар курнă хĕр допросра каланинчен.***

«Але, сывлăх сунатăп! Эпĕ çынна вĕлертĕм! Мĕн? Çук, полицие шăнкăравламан-ха, тӳрех сирĕнпе, НТВпа, çыхăнтăм».

***Телефонпа пĕлтернинчен.***

«Ипотекăпа 1 млн тенкĕ кредит илсе уншăн 20 çул тӳлесе пурăнни мĕн тума кирлĕ? Тӳрех 10 миллион вăрлатăп та – уншăн 5-6 çул ларса тухатăп. Лайăхрах вĕт!»

***Вăрăсен калаçăвĕнчен.***

«Иртнĕ ĕмĕрĕн хаяр 90-мĕш çулĕсем ахаль иртмерĕç. Пролетариат диктатурин аталанса çитмен социализмĕнчен ултавçăсен диктатурин аталаннă бандитизмĕн тапхăрне ăнăçлă куçрăмăр».

***Политика тишкерӳçин пĕтĕмлетĕвĕнчен.***

«Депутат предприятисене рейдер мелĕпе ярса илнине тĕпченĕ май полици подполковникĕ... майор, капитан, лейтенант, сержант, рядовой Сидоров ĕç-пуçа нимĕн чухлĕ те уçăмлатайман».

***Полици пуçлăхĕн рапортĕнчен.***

«Оперушкăн министр хваттерне ухтарма кĕнĕ те – аташса кайнă».

***Дежурнăй докладĕнчен.***

«Перкелешӳсем ăçта пулнине тĕпе хурса палăртнă статистикăна шута илсен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче хĕçпăшал сутма чарни мар, вăтам тата аслă вĕренĕве пĕтерни вырăнлăрах».

***Статистика пĕтĕмлетĕвĕнчен.***

# Кроссворд



**Сылтăмалла.** 1. Тĕрме-колонири судпа айăпланă çын. 5. Ефим Никитин актерăн хушма ячĕ. 8. Детектив ăсти ... Кристи. 9. Хаяр, кăнттам. 10. «Ырă» антонимĕ. 11. Çыннăн сăн ӳкерчĕкĕ. 14. Ристан тумтирĕ. 16. Вăрă пирки «... алă» теççĕ. 18. Пахча çимĕç. 20. Больницăри пӳлĕм. 21. Фольклор тĕсĕ. 22. Ют çĕр-шыва кайма ирĕк паракан документ. 23. Сиен, тăкак. 25. «... уполномочен заявить» фильм. 28. Пĕчĕк ноутбук. 32. Иван Ургант ертсе пыракан телекăларăм. 33. «Легавый» телесериалти Андрей Ягудин вылянă вăрă сăнарĕ. 34. Улпут хуçалăхĕ. 35. Арпус пылĕ. 36. ... Гриффит киноактриса.

**Аялалла.** 1. Аслă шкул ертӳçи. 2. Хăмлаллă шĕвек. 3. Çурçĕр Атлантика альянсĕ. 4. Чӳречен пуçтах ачасем час-часах ватакан пайĕ. 5. Çарсен тăваткалсенчен йĕркеленĕ речĕ. 6. Часовой тăракан вырăн. 7. 36 карт. 12. ... Барабас. 13. Йывăçăн каснă хыççăн юлакан тĕпĕ. 15. Пĕчĕк жираф. 16. Шкулти пĕр ӳсĕмри ачасен ушкăнĕ. 17. Статор тусĕ. 19. Челябинск облаçĕнчи хула. 22. Шерлок Холмс тусĕ. 24. «Пиччĕн» енĕн хыçĕ. 26. «Нарспи» поэмăри сăнар. 27. Фотопленка сыпăкĕ. 29. ...-Плесид. 30. ... Шифрин. 31. Вăл чул кастарать.

## Хуравĕсем:

**Сылтăмалла:** 1. Ристан. 2. Кĕлпук. 8. Агата. 9. Кăра. 10. Усал. 11. Портрет. 14. Роба. 16. Кукăр. 18. Улма. 20. Палата. 21. Такмак. 22. Виза. 23. Сăтăр. 25. ТАСС. 28. Планшет. 32. «Смак». 33. Якут. 34. Имени. 35. Нардек. 36. Мелани.

**Аялалла:** 1. Ректор. 2. Сăра. 3. НАТО. 4. Кантăк. 5. Каре. 6. Пост. 7. Кулата. 12. Карабас. 13. Тунката. 15. Окапи. 16. Класс. 17. Ротор. 19. Миасс. 22. Ватсон. 24. Тӳнтер. 26. Сентти. 27. Кадр. 29. Лейк. 30. Ефим. 31. Укçа.

# Ха-ха-ха! Ахăлтатса кулар-ха!

**Айăпланакан:**

**– Арăму патне еркĕнĕ килнĕ терĕç. Киле чупса çитрĕм: чӳрече уçă та – тӳрех унтан тинкертĕм. Урампа ак çак çын чупса пырать. Тумбочкăна ярса илтĕм те чӳречерен ăна унпа петĕм.**

**Шар курнă çын:**

**– Эпĕ спортпа туслă, кашни ир чупма тухатăп. Кĕтмен те – çӳлтен тумбочка вĕçсе анать...**

**Свидетель:**

**– Тумбочкăра лараттăм...**

* * *

**Сейфсене çаратса çӳренĕ преступнике вĕлермелли приговор палăртнă та – çылăхĕсене каçарттарма ун патне камерăна пачăшкă килнĕ:**

**– Турă ывăлĕ, хăвăн çылăхусем çинчен ним пытармасăр каласа пар – çапла тусан кăна сан умунта çăтмах хапхи уçăлĕ!**

**– Мĕн? Тĕнчере эпĕ уçма пултарайман хапха çук!**

* * *

**Тĕрмерен хăрушă преступник тарни çинчен радиопа пĕлтереççĕ, асăрханullă пулма сĕнеççĕ. Талăк иртет те – тепĕр пĕлтерӳ: таркăн хăйĕн ирĕкĕпех тĕрмене таврăннă иккен. Тĕлĕнмелле вĕт – журналистсем пухăнаççĕ, тĕпчеççĕ: мĕншĕн таврăнтăн?**

**– Мана унашкал ирĕк кирлĕ мар, – тет арçын. – Ир еннелле пытанса-йăпшăнса тенĕ пек киле çитрĕм. Арăм тӳрех йĕтĕрпе сиксе ӳкрĕ: «Эсĕ тарни çинчен радио каçхине улттăрах пĕлтерчĕ, халĕччен ăçта сулланса çӳрерĕн?!» – тесе ятлаçать.**

* * *

**Çын вилсен пытарма пулăшакан бюрона киллер килнĕ – вилнĕ юлташĕн вил тăпри çине хума чечек кăшăлĕ хатĕрлесе памашкăн ыйтать.**

**– Хăйăвĕ çине мĕнле çырар? – ыйтаççĕ унран.**

**– «Васьăна – Сашăран» тесе çырăр. Çук, апла мар-ха, «Каçар, тăванăм, паллаймарăм» тейĕр.**

* * *

**Тĕрме камеринчи ристансем решеткеллĕ чӳречерен кулянса тинкереççĕ. Ассăн сывласа пĕри сăмах хушать:**

**– Вовăна питĕ шел. Сивĕ, çумăр çăвать – çак çанталăкра ирĕке тух-ха...**

**Кăларăма Николай КОНОВАЛОВ хатĕрленĕ.** • **Çырăр:** Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13, «Хыпар» – КРИМ • **Шăнкăравлăр:** Тел. /8352/ 56-05-21.

# МĔН ÇЫРАÇÇĔ ХАÇАТСЕМ

*Шăпасем*

## Кăмăл çирĕплĕхĕ тăван çĕре таврăнма пулăшнă



***Вера Фоминична Косицина 90 çулта. Вăл Краснодар крайĕнчи Ильски станицинче хăй тунă çуртра пурăнать. Упăшкипе ывăлĕ вилнĕ, мăнукĕ Çурçĕре вăрăм укçа шырама кайнă. Ниçтах та тухса çӳремест, шăпи вара унăн темле кăткăс фильмран та ирттерет: концлагерь, Тăван çĕр-шыва Америкăпа Австрали, Китай урлă таврăнни…***

### 41-мĕш çулхи каникул

Вăл 1923 çулта Ростов облаçĕнчи Платов хуторĕнче çуралнă. Ашшĕпе амăшĕн 6 ача пулнă. Çемье «статуслă» шутланнă пулин те чухăн пурăннă. Ашшĕ – Георгий хĕресĕн тулли кавалерĕ, Хĕрлĕ çар командирĕ пулнă. Анчах та паттăрла ĕçĕсем çинчен каласа кăтартма юратман. Ашшĕ вилсен çеç Вера хутсен хушшинче вăрçă умĕнхи журналтан касса илнĕ сăн ӳкерчĕке курнă. Ăна Ворошиловпа тата Буденныйпа пĕрле ӳкерсе илнĕ. Элеваторта склад заведующийĕнче ĕçленĕ май чи йывăр çулсенче те колхоз тыррине килне пĕр пĕрчĕ те илсе таврăнман.

1940 çулта Вера Киеври сутуилӳпе экономика техникумне вĕренме кĕнĕ. Студентсене ашшĕ-амăшĕ 5 тенкĕ çеç пама пултарнă. Хăйĕн ĕçлесе илмелле пулнă. Хутор витĕр чукун çул иртнĕ. Вера станцире пылак пăр сутма пуçланă. Тепĕр 3 кунран ĕçрен тухнă – ĕçлесе илнинчен ытларах çисе янă. Юлнă кунсенче иртен пуçласа çĕрлеччен хут хирте ирттернĕ. 20 михĕ тулă ĕçлесе илнĕ... «Пуян» хĕр вĕренме кайнă. Çулталăк вĕренсен каникула килне таврăнман – Шепетовка станицинчи лагерьте пионервожатăй пулса ĕçлеме тытăннă. Хĕр кĕрлĕ-çурлă тăхăнмашкăн пальто илме ĕмĕтленнĕ.

Ачасене çывăрма вырттарнă хыççăн вожатăйсем ташă касçĕсене чупнă. Çĕртме уйăхĕн 21-мĕшĕнче те çавнашкал пулнă. Таврăнсан часах çывăрса каяйман, каччисем – çар училищин курсанчĕсем – пирки калаçнă. Кăштах çес çывăрма ĕлкĕрнĕ. Бомбăсем çурăлнă, мотоциклсем кĕрленĕ, автоматсем шатăртатнă... Вăрçă.

– Пире груз турттаракан машинăсем çине хăваласа кĕртрĕç, кузов борчĕсем çӳллĕ мар. Пĕрремĕш çаврăмра темиçен тухса ӳкрĕç, фашистсем вĕсене персе вĕлерчĕç. Пĕр-пĕринчен çирĕп тытса пытăмăр. Польшăри лагере илсе кайрĕç. Унта пире мунчана ячĕç, салтăнтарса нумайччен пăхрĕç. «Пăс паракан вырăнти» маччара «вентиляци» пурччĕ. Çакăнтан газ янине эпир ун чухне пĕлмен те. «Браклан» ачасем юлашки хутĕнче «çăвăнчĕç», вĕсене пурне те вĕлерчĕ. Лагерьсем, бараксем, крематорисем – пурне те малтанах тунă. Çынсен çакнашкал тискерлĕхне ăс-тăн йышăнасшăн марччĕ. Тĕлĕк-и тен – апла пулма пултараймасть-çке!

Анчах та веçех чăн пурнăçра пулнă. Черетлĕ «селекци» хыççăн 17 çулти Вера Дортмунда лекнĕ. Ирхине пĕрер татăк çăкăр панă. Икĕ кунра пĕрре «вĕри» апат – виçĕ кашăк пăтă. Вăйлăраххисем вăйсăрланса çитнисен пайĕсене турта-турта илнĕ. Часах çӳллĕ пӳ-силлĕ хĕре çитĕннисем патне куçарнă. Верăна вагонеткăсене кустарса кайнă çĕре тăратнă. Вĕсене нимĕç хĕрарăмĕсем /вольнонаемнăйсем/ тĕрĕслесе тăнă. Çаксем ĕçе кофе, ветчинапа бутерброд илсе пынă. «Хăшĕсем хăйсем çисе ярайманнине пире паратчĕç».

– Çав кунхине вĕсем хăйсен термосĕсене усрĕç, кофе шăрши лĕклентерчĕ мана. Айккинелле пăрăнтăм. Урасем кĕлеткене тытмаççĕ. Чĕркуçленсе лартăм. Кĕтмен çĕртенех çӳлтен темĕскер килсе çапрĕ, куçран вут-хĕм сирпĕнчĕ.

Ун çине çӳлтен... пуçлăх хĕрĕ персе аннă иккен. Пĕчĕкскер ашшĕ патне килнĕ те лифт шахтин шăтăкне анса кайнă. Хĕр ача ӳтне шăйăрттарнă çеç. Вера вара икĕ аллине те хуçнă, темиçе шăлĕ тухса ӳкнĕ, питне те суранлатнă. Çапах та суранĕсем çăлнă та хĕре.

Шахта директорĕ ăна «тав тунă». Пĕр уйăх Вера пуçлăх садĕнче ӳсен-тăрана пăхса тăнă. Ун хыççăн каллех шахтăна янă. Çĕр айĕнче пурĕ 3 çул ирттернĕ. Америка самолечĕсем бомбăсем пăрахнă чухне те /çапла майпа ирĕке кăларнă/ çĕр айĕнче пулнă. Ку хутĕнче тăна кĕрсен çакă паларнă – вăл Вашингтонра, гипс ăшĕнче выртать иккен.

### Ютсен хушшинче хамăрăннисем

Çав тери начаркка тата пысăк пулнипе /гипс ăшĕнче тата/ ку каччă пулĕ тесе шухăшланă, арçынсен госпитальне янă. Пĕрле ĕçленĕ Наташăпа та çаплах пулса тухнă. Сипленнĕ хушăра хĕрсем туслашнă. Вĕсене ют чĕлхепе çырнă справкăсем парса кăларнă. Документсем паччăр тесен Америка гражданлăхĕ илмелле пулнă. Верăпа Наташа Тăван çĕр-шыва каясшăн çуннă. Океан патне çитетпĕр те совет пăрахучĕ çине ларатпăр тенĕ.

– Чукун çулпа кайрăмăр, тепĕр чухне пачах урăх еннелле. Акă тинех океан патне пырса тухрăмăр, анчах... Портра пирĕн пĕр пăрахут та çук иккен.

Хĕрсене панă укçа чаксах пынă, чăтмалла мар çиес килнĕ. Кастрюльсем çунăшăн портри столовăйĕнче çитерклеленĕ.

– Çапла пĕррехинче урам шăлатăп, инçех те мар иккĕн пыраççĕ – усал сăмахсемпе вăрçăнаççĕ. Эпĕ ĕсĕклеме пуçларăм: «Савнă çыннăмсем, эсир пирĕннисем-и?!» Вĕсем: «Ăçтан тупăнтăн эсĕ, чиперкке?»

Юрăпа Коля «пирĕннисемех» пулман, Власов çарĕсенче службăра тăнă. Вĕсен ылтăн пулнă, çулшăн тӳленĕ. Трюмра пытанса кайнă. Пăрахут ишнĕ май шывра кăштах сиссентернĕ, çурма тĕттĕм пулнă. Хĕрсем юрату авăрне путнă.

– Юра илемлĕччĕ. Çакă мĕн патне илсе пырасса пĕлнĕ пулсан-и... Çурма çулта Японипе вăрçă пынипе Владивостока хупнине пĕлтĕмĕр. Пăрахута Австралие ячĕç. Пĕррехинче çĕрле карап чарăнчĕ, капитан пире кимĕпе çыран хĕррине илсе тухрĕ. Сиднейра нумай вăхăт тăраççĕ, тĕрĕслевсем имĕш...

Тăватă çамрăк портран инçете пырса лекнĕ. Апат пĕтсе çитсен каччăсем хĕрсене айăплама пуçланă: «Карап çинче хĕрарăм пулни – инкеке, иккĕн тĕк...» Юра Верăна çапса янă, хĕр – хирĕç. «Паттăр» хиркеленнĕ вăхăтра тарса пытаннă. Сăрт çине хăпарса ыттисем кайиччен те вырăнтан тапранман. Унта вăл инçетри порт çутисене курнă. Тĕттĕмленсен çав çутă еннелле утнă. Çул çинче чи хăрушши халĕччен курман кенгурусемпе Австрали аборигенĕсене курни пулнă. Гаваньте совет пăрахучĕ тăнă. Документсăр хĕре капитан çула май Китая хăварма шантарнă, совет посольствине мĕнле тупмаллине каланă. Вера тупнă. Вара тĕрмене лекнĕ.

– Мана хĕнерĕç, сутăнчăк вырăнне хучĕç. Конвойпа Владивостока ăсатрĕç. Камерăра хĕрарăмсем вĕрентрĕç: «Тĕрĕссине çеç кала, тĕрĕсси айне çеç алă пус». Эпĕ пуçа усмарăм.

Верăна кăларнă. Владивостокра вăл пурăнмалли кĕтес, ĕç тупнă. Часах предписани илнĕ: «... çынна палласа илме пымалла». Милицире Юрăпа тĕл пулнă, лешне 10 çуллăха ирĕклĕхсĕр хăварнă. Вăл Наташа ача çуратнă чухне вилни, Кольăна... крокодил çисе яни çинчен пĕлтернĕ. Вера хăй экономиста вĕренсе тухнă, чăн-чăн юратăвне тупнă.

– Тăван хутора Платова нимĕçсем çунтарса янăччĕ. Аттепе анне Кубане куçнăччĕ. Вĕсен патне отпуска кайрăм. Пĕррехинче райцентра пуçтарăнтăм, автобус çукчĕ. Пĕр каччă машинăпа илсе кайма пулчĕ. «Эсир ăçтан?» – «Инçет Хĕвел тухăçĕнчен». Ентешсем иккен. Вăл мана перекет кассине леçсе ячĕ, кайран киле илсе таврăнчĕ. Ирччинех пĕрле лартăмăр. Пĕрлешрĕмĕр, ывăл пăхса ӳстертĕмĕр.

Мăнаçлăн утнă вăл яланах. 90 çулта та çурăмне тӳп-тӳрĕ тытать, пуçне усмасть.

■ **Светлана ЛАЗЕБНАЯ.**

/«Аргументы и факты»/

*Истори вăрттăнлăхĕсем*

## Крым тутарĕсене мĕншĕн репрессиленĕ

***Крым-тутар çемйисем 70 çул каяллахи пулăмсене ĕнерхи пекех ас тăваççĕ. Ку 1944 çулхи çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче пулнă.***

### Айăпланă халăх

Çав кун Крым тутарĕсене хăйсен çурчĕсенчен темиçе сехетрех кăларнă та тăван кĕтесĕнчен пин-пин çухрăма депортациленĕ. Çире пур хĕрарăмсене, кăкăр ачисене, ватăсене – пурне те. Крымри тутарĕсене сутăнчăк халăх тесе калама пуçланă. Репрессие тӳссе ирттернисенчен нумайăшĕ сывах-ха.

– Шухăшласа кăларнă сăлтавĕ паллă – нимĕçсемпе çыхăну тытни, – терĕ Крым тутарĕсен Мускаври диаспорин представителĕ Мустафа Мухтемеров /унăн ашшĕ-амăшне Крымран 1944 çулта кăларса янă/. – Крымри 20 пин тутар Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче нимĕçсемпе çыхăну тытнă имĕш. Кун пекки Крымра кăна пулман. Тĕслĕхрен, Власов çарĕнче 800 пин вырăс, украин, белорус фашистсемшĕн çапăçнă. Кăларса янин тĕп сăлтавĕ, паллах, «сутăнчăклăхра» мар. Манăн 18 пин ентеше çеç вăрçă вăхăтĕнче орден-медальпе наградăланă. Совет Союзĕн Геройĕ Амет-хан Султан – Крым тутарĕ, сăмах май, вăл Василий Сталинăн çывăх тусĕ пулнă.

### Çĕнĕрен пăхса тухмалли çук

Крым тутарĕсем Сталина мĕнпе юрайман-ха?

– Манăн çемье Джага-Шейх-Эли салинчен. Ăна совет влаçĕ вăхăтĕнче çĕнĕ ят – Красное /Хĕрлĕ Гварди районĕ/ – пачĕç, – аса илет депортацие чăтса ирттернĕ Асан Адилов. – Пирĕн сала айккинерех вырнаçнă, оккупаци хыççăн эпир нимĕçсене курман та темелле. Вĕсем Крыма ярса илнине пĕлнĕ-ха, çапах та пирĕн пурнăç малтанхи пекех шунă – сухаланă-акнă, выçлăх çулĕсенче чĕрĕ-сывă юлма тăрăшнă.

Совет Çарĕн Çĕнтерĕвĕ çинчен Адиловсен çемйи тăванĕнчен пĕлнĕ.

– 1944 çулхи çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче районта арçынсене ĕç çарне илесси çинчен пĕлтерчĕç, вĕсене килтен 25 çухрăмри лагере илсе кайнă. Пирĕн ялта хĕрарăмсем, ачасем, ватăсем çеç юлчĕç, – аса илет Асан-ага. – Çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче пирĕн пата НКВДн икĕ офицерĕ пырса кĕчĕ: «Сире пуçтарăнма 15 минут, апат, кĕпе-тум илĕр те тухăр». Килте анне тата эпир 4 ачаччĕ: асли – 8 çулта, кĕçĕнни – çулталăкра. Эпĕ 4 çула çитнĕччĕ. Çынсене унччен выльăх турттарнă вакунсене лартрĕç те Узбекистана илсе кайрĕç.

Вырăнтан кăларса янă тутарсене унта-кунта сапаланă – кама Узбекистана, кама Çĕпĕре. Адиловсене, 5 çынна, пĕчĕк пӳлĕм панă, унта вĕсем çывăрма çеç пынă. Ытти вăхăтра пурте хăмла плантацийĕнче ĕçленĕ. Выçлăх, тасамарлăх, йывăр условисем, чир-чĕр – çаксене пула Крым тутарĕсен 25% депортацин малтанхи çулĕсенчех вилнĕ.

90-мĕш çулсенче çеç Крым тутарĕсене тăван вырăна таврăнма ирĕк панă. Тутарсем çĕр лаптăкĕсем туяннă, çурт-йĕр çавăрнă.

### Ку таранччен тасса ячĕсене тавăрман

1944 çулта Крымран 178 пин çынна кăларса янă.

– Депортацин тĕп тĕллевĕ Крыма тĕп халăхран тасатасси пулнă, – тет Мустафа Мухтеремов.

Пушанса юлнă çĕрсем çинче Союз пĕлтерĕшлĕ санаторисем, курортсем уçнă. Официаллах мар пĕр теори тăрăх – Крым тутарĕсем Совет Союзĕн вăрттăн планĕсене те кансĕрлеме пултарнă. Югослави вице-президенчĕ Милован Джилас журналистсене Крым халăхне мĕншĕн кăларса яни çинчен каласа кăтартнă /Сталин генеральнăй секретаре Титона пĕлтернĕ имĕш/: çурутрав çине еврейсен республикине тума палăртнă. АПШ ку проекта хутшăннă – вăл еврейсен «Джойнт» ыр кăмăллăх организацийĕ урлă Советсен çĕр-шывне 10 млрд доллар панă /Крымри 375 гектар çĕре салука хывнă/. Штатсем проекта «Крым Калифорнийĕ» тенĕ, «Агро-Джойнт» компани облигацийĕсене те пичетленĕ. Ăна Америкăри паллă 200 çын туяннă. Тĕллеве 1945 çулта Рузвельт вилни татнă. Сталин, каярах Хрущев та килĕшӳсем çинчен «маннă». Паллах, ку тавлашуллă верси, çапах та пĕр енĕпе чăнлăхпа килĕшсе тăрать: Крым яланах илĕртмĕш çĕр лаптăкĕ пулнă, пулĕ те. Уншăн халăха та хĕрхенмен.

1944-1945 çулсенче репрессиленĕ халăхсен – ингушсен, чеченсен, балкарсен тата ыттисен те – тасса ячĕсене официаллă майпа тавăрнă. 70 çул тăршшĕнче Крым тутарĕсем ку списока пĕрре те кĕмен. 2014 çулта çеç вĕсен ку тĕлĕшпе шанчăк çуралнă – Путин Крым тутарĕсене «туллин реабилитацилеме» сăмах панă.

■ **Римма АХМИРОВА.**

/«Собеседник»/

*Аслă Çĕнтерӳ: 70 çул*

# Логиновсем

***Хĕрлĕ Чутай районĕн Çĕнĕ лапамĕнче унăн паллă хĕрĕ-ывăлне чысласа лартнă мрамор палăксенчен пĕрне Совет Союзĕн Геройне Алексей Романович Логинова халалланă. Паттăр Упукушкăнь ялĕнче çут тĕнчене килнĕ.***

Унăн ашшĕ Роман Степанович, 1870 çулта çуралнăскер, вăтам хресчен хуçалăхĕн тилхепине çирĕп тытса пынă. Хăйĕнпе пĕр çулти Евдокия Михайловнăпа пĕрлешнĕ, пилĕк ача çуратса вĕсене таса та сывă ӳстерме тăрăшнă. Вăл çĕнĕ самана юхăмне чунĕпе йышăнмасан та, ывăлхĕрне пурнăçпа тан пымашкăн май туса парас тесе çĕнĕрен йĕркеленекен колхоза кĕнĕ. Ывăлĕсене пуçламăш пĕлӳ те пулин парса çутта кăларма ăнтăлнă.

Пĕрремĕш ачи Хветĕк ял шкулĕнче тăватă çул вĕреннĕ хыççăн ашшĕпе пĕрле çĕр ĕçне кӳлĕннĕ. Пĕлӳллĕ çамрăк вун улттă тултарсан Çĕпĕрти Омск станцине çитсе ĕçе вырнаçнă. Икĕ çултан, рабочи класăн хĕсĕк пурнăçĕпе паллашсан, каллех Упукушкăнне таврăннă. Кĕçех 19-ти каччăна Кăрмăш уесĕн çар комиссариачĕ империализм вăрçине мобилизациленĕ. 1918 çул пуçламăшĕнче ашшĕн килне çитнĕ. Пăшал тарĕн çулăмĕпе пиçнĕ хресчен ачине кĕçех Хĕрлĕ Çар ретне тăратнă. 1922 çулччenex граждан вăрçинче çапăçнă Федор Логинов.

Çав çул Атăл тăрăхĕнче, вăл шутра Чăваш облаçĕнче те, выçлăх алхаснă. Çитĕнекен ăрăва апатлантармашкăн шкулсен çумĕнче, вĕсем çук ялсенче те, столовăйсем уçнă. Федор Романовича хăйсен ялĕнче кĕçĕн çулти ачасем валли йĕркеленĕ столовăй заведующине лартнă. Халăх шанăçне тӳрре кăларнă Федор. Таса чунлă çамрăка ял канашĕн членне суйланă. Уйрăм хуçалăхсене «Жнейка» колхоза кĕме агитациленĕ. Вунă çула яхăн ялăн общество пурнăçне хастар хутшăннă. Шăллĕ Элекçи ял канашĕн ĕçтăвкомĕн секретарĕнче тăрăшнă. Çирĕм çичĕ çул тултарсан Ф.Логинов ял хĕрĕпе Анисия Алексеевнăпа мăшăрланнă. Пурнăç урапи вĕçĕмех пĕр йĕрпе чупмасть тесе ваттисем тĕрĕс каланă. Хăйĕнчен ултă çул кĕçĕнрех арăмĕ йывăр чире пула вăтăртах çĕре кĕнĕ. 4-ри ывăлĕпе Шăнкăрчпа /хут çинче Василий/ тăрса юлнă урçа хăйĕнчен



• *Петр Романович.*

14 çул кĕçĕн хĕре качча илнĕ. Ашшĕ ăна та, шăллĕне Элекçие те çĕнĕ йывăç пӳртсем лартса панă.

45 çулти Федор Романовича, уншăн виççĕмĕш шутланакан Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине, 1942 çулхи пуш уйăхĕнче илсе кайнă. Артиллери çарĕсен тупă наводчикĕ /шутлав ăсти!/ Кăнтăр Хĕвел анăç /ятне улăштарнă хыççăн – Виççĕмĕш Украина/ фронтне лекнĕ. Ф.Логинов сержант – артиллерист, оруди командирĕ, çак фронт йышĕпе Сталинградшăн пынă хаяр çапăçусене хутшăннă. Унăн ăсталăхĕпе хăюлăхне «Паттăрлăхшăн» медальпе хакланă. Пĕр хут суранланнă, тепре контузи илнĕ. «Берлина илнĕшĕн» медале тивĕçсе çĕнтерӳçĕ чĕрĕ те сывă таврăннă. Кительне хывма ĕлкĕреймен фронтовика юхăнса хавшанă колхозăн уй-хир бригадирне лартнă. Çĕнĕ çула кĕрсен колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче председателĕн пуканне ăна шанса панă. Ĕçлекенсене çăкăр çитерме пултаракан ертӳçĕ кирлĕ пулнă! Федор Логиновăн ĕç-хĕлĕ кайран та, мĕн пенсие тухиччен, аллăмĕш çулсен варринче йĕркеленнĕ Ворошилов ячĕллĕ колхозпа çыхăннă. Хăй пурăннă чухне унпа тĕл пулса паллашма тивнĕччĕ. Виçĕ вăрçă ветеранĕн калаçăвĕнче мăнаçланасси палăрмастчĕ. Хăйне яланах сăпайлă тытатчĕ. Туртмастчĕ. Хăна-вĕрлере эрехе тутанса кăна пăхнă.

Роман Логиновăн вăталăх ывăлĕ Элекçи те пир сумка çакса хутла вĕренмешкĕн салана тăватă çул утнă. Пĕрле ăс пухакан тантăшĕсен хушшинче тăрăшулăхпа палăрнă. Юлашки вĕренӳ çулне вĕçленĕ чухне пиччĕшĕ хĕсметре тăнă, шăллĕсем хăйсен хут пĕлменлĕхне пĕтерме Штанаша утнă. Çавна пула вулассиçырассине малалла аталантарайман арçын ача. Аппăшĕпе Варварипе иккĕшĕн аслисемпе пĕр тан тыр-пул акса-пухса кĕртме, выльăх пăхма тивнĕ. Алексей ĕç кĕнекине Атай вулăсĕн кооперативĕнче лашапа курьер тивĕçĕсене пурнăçлама пуçăнсан уçнă.



• *Алексей Романович.*

Çулĕсем иртнĕ май çамрăкăн утăмĕсем сулăмланса, ĕç кĕнеки тулса пынă. Судпа прокуратура ĕçченĕсен йышне кĕрсе вăл халăх сучĕн судйин пуканĕ çине ларнă. Çитĕнӳсем тума пуян ăсхакăлĕ, тĕллевлĕхĕ, хитре, тĕрĕс çырма пултарни пулăшнă.

Алексей Логиновăн ĕç-хĕлĕпе паттăрлăхĕ питĕ курăмлă. Геройăн ырă çав енĕсене пысăк очеркра çутатмалла. Унăн пархатарлă кун-çулĕ çинчен тĕрлĕ материалта тĕплĕн çырса кăтартнă. Алексей Романович хăй çеç мар, унăн аслă ывăлĕ Михаил та вăрçă вутне кĕрсе 1945 çулхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнче хаяр çапăçура пĕтнĕ. Ашшĕпе ывăлĕ иккĕшĕ те вилĕмсĕрлĕхе çул хывнă. Хальхи вăхăтра Геройăн килĕ пушă.

Роман Степановичăн Элекçи хыççăнхи вăталăх ывăлĕ Йăван Кушлавăш ял хĕрĕпе Матрена Ивановăпа çемье çавăрнă. Арçын ялтан тухса кайса Мускавра ĕçе вырнаçнă, кăштахран мăшăрне хăйпе пĕрле тĕп хулана илсе кайма ятарласа ун патне килнĕ. Çамрăк хĕрарăм килĕшмен, тăван тăрăхрах юлнă.

Вăрçăччenex Иванпа Петр Логиновсем автомашина водителĕн специальноçне алла илнĕ. Ашшĕпе амăшĕ вĕсене вĕрентме тăрăшни паха йĕр хăварнă. Чи кĕçĕн ывăлне Петĕре вăрçă пуçлансанах тăван-пĕтенĕ çара ăсатнă. Вăл утă уйăхĕн пуçламăшĕнчех çапăçакан çара лекнĕ те танксен 27-мĕш бригадипе вăрçа кĕнĕ. Çамрăк чухне ĕçре хăрушсăрлăх йĕркине пăснăран суранланнă Петĕр ялти юлташĕсемпе пĕрле хĕсмете çакланайман.

– Çапах та вăл финн вăрçинче пулнă тенине ас тăватăп, – терĕ ывăлĕ Николай Петрович.

Петр Логинов, танксен бригадинчи автомашина водителĕ, 1942 çулхи утă уйăхĕччenex малти эшелонран тухайман. Контузи илсе сипленнĕ хыççăн 64-мĕш гварди танк бригадинче те автомашинăпа çӳренĕ. «Çапăçури



• *Федор Романович.*

паллă ĕçсемшĕн», «Берлина илнĕшĕн», «Германие çĕнтернĕшĕн» медальсен кавалерĕ, гварди салтакĕ юратнă çемйи патне çĕнтерӳпе таврăннă.

19-та çемье çавăрнă Петĕр çуралнă килĕнчен уйрăлса тухса малтанлăха мăшăрĕн килĕнче тĕпленнĕ. Вăрçăра кушăхнă аллисем руль патнелле туртăннăран, специальноçĕпе ĕçе вырнаçас тесе Пермь хулине çитнĕ. Çемйине те унта куçарнă.

Роман Логинов виçĕ кин кĕртсен те хĕрне Варварие качча пама васкаман çеç мар, ăна хутла вĕренме те сĕнмен. Хĕрарăмăн кăмака умĕпе тĕпел кукринче çаврăнăçуллă пулмалла тенĕ. Хĕр ĕмĕрĕ тăван килĕнче хăналăх çеç иккенне те асран яман. Каччă часах тупăннă: çураçнă хĕрĕнчен пилĕк çул кĕçĕн Павел Тимофеев /Кушлавăш ачи/. Вĕсен ача сахал мар пулни паллă. Кил хуçи Павăл вăрçă хирĕнчен таврăнайман.

Ĕнтĕ йăх пуçĕ Роман Степанович, йывăр ĕçпе хавшанă ватă ар, ывăлĕсене вăрçăран кĕтсе илеймесĕрех, шалкăм çапнипе 72 çулта çĕре кĕнĕ. Мăшăрĕ Ултӳтти /ялта çапла чĕннĕ/ аслă тата кĕçĕн ывăлĕсене пĕччenex кĕтсе илнĕ. Ăна вăталăх ывăлĕсемпе пĕрле телей тĕпелĕнче ларма пӳрмен. Йăванĕ вăрçă пуçлансан Мускаври çемйине эвакуаци йĕркипе тăван ялне ăсатнă. Чăвашран тухнă иккĕмĕш арăмĕ Клавдия хĕрĕпе вăрçă чарăниччен хуняшшĕпе хунямăшĕн килĕнче пурăннă.

1944 çулта П.Ялкир, пулас поэт, район хаçатĕнче «Днепр геройĕ» сăвă пичетлесе кăларнă. Хутла пĕлмен Евдокия Михайловна ывăлне халалласа çырнă сăвва вулайман. Çапах Элекçи Герой ятне тивĕçнине пĕлнĕ. Хăй çуратнă ачисене этеме юрăхлă пулма панă пилĕ ахаль çухалманнине, сăваплăхĕ çитнине чĕрипе туйнă. 77 çул тултарсан Е.Логинова çĕре кĕнĕ.

Герой ячĕпе уçнă пысăках мар парк пĕр тăван Логиновсене халăх асĕнче яланлăха хăварма пулăшать. Унти палăк çине вĕсен ячĕсемпе пĕрлех тата 86 паттăрăн ят-хушаматне çырнă. Ырă ĕçе ял хĕрĕ Ирина Михайловна Романова йĕркеленĕ.

■ **Лев МЕДВЕДЕВ.**

Хĕрлĕ Чутай районĕ

# Редакцие таврăнайман

Нимĕç фашисчĕсем Совет Союзĕн çĕрĕ çине тапăнса кĕрсен ирсĕр тăшманпа çапăçма журналистсем те алла хĕç-пăшал тытнă. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине республикăри хаçат-журналтан, Чăваш кĕнеке издательствинчен, радиокомитетран 120 яхăн журналист хутшăннă, вĕсенчен хĕрĕхĕшĕ хаяр çапăçусенче паттăрсен вилĕмĕпе пуç хунă.

«Хыпар» хаçат редакцийĕн историйĕнче «Чăваш коммунинчен» фронта ăсаннă, фронтсенче хăюлăх кăтартса вилнĕ журналистсен ячĕсем ылтăн сас паллисемпе çырăнса юлнă. Паян кĕскен те пулин аса илер-ха вĕсене.

Анисим Григорьевич Григорьев 1931-1941 çулсенче чăвашсен тĕп хаçатĕнче ĕç ялкорсен, ял хуçалăх пайĕсен литсотрудникĕнче ĕçленĕ. Журналистикăн Мускаври институтĕнчен куçăн мар майпа вĕренсе тухнă хыççăн 1938 çулхи юпа уйăхĕнче А.Григорьева ял хуçалăх пай ертӳçине куçарнă. Çак должноçран вăл 1941 çулхи утă уйăхĕнче Хĕрлĕ Çар ретне тăнă.

1942 çулхи юпа уйăхĕнче стрелоксен 260-мĕш дивизийĕ нимĕç фашисчĕсемпе Сталинград çывăхĕнче паттăррăн çапăçнипе палăрать. Дивизири Григорьев минометчик тăшман çине вут-çулăм сапать. «Тăшмана çапса аркататпăр, – тесе çырать вăл редакцие янă виç кĕтеслĕ çырура. – Шанăр: çĕнтерӳ пирĕнтех пулать». Шел, çĕнтерĕве кĕтсе илеймест журналистсалтак. Фастов ятлă хуторшăн пынă çапăçура вилмеллех аманать.

Георгий Александрович Костин вăрçăччен – «Чăваш коммуни» хаçатăн фотокорреспонденчĕ. Хаçатăн кашни номерĕнчех ял хуçалăхĕпе промышленноçра хастар ĕçпе палăрнисен сăн ӳкерчĕкĕсене пичетленĕ вăл. 1941 çулхи çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче вăл хăйĕн пиччĕшĕпе – «Красная Чувашия» хаçат фотокорреспондентĕнче тăрăшнă Александрпа – пĕрле Тăван çĕршыв хӳтĕлевçисен ретне тăрать. Пĕр тапхăр çар ĕçне вĕреннĕ хыççăн Георгий Костин артиллерист пулса тăрать, рядовойран лейтенанта çитет. Взвод командирĕ паттăрлăхпа палăрать, «Çапăçури паллă ĕçсемшĕн» медале тивĕçет.

Георгий Костин ертсе пынă артбатарея 1943 çулхи çурла уйăхĕнче Курск пĕккинче паттăррăн çапăçать. Анчах та çурла уйăхĕн 8-мĕшĕнче нимĕç самолечĕсем çинех тапăнса бомба тăкнă чухне вилет. Çакăн çинчен пĕр расчетра хĕсметре тăнă пиччĕшĕ Александр йăмăкне Нинăна çапла хыпарлать: «Батарея çывăхне ӳкнĕ бомба Георги пурнăçне татрĕ, Смоленск çывăхĕнчи Будди ялĕнче пытартăмăр...»

Вăрçăченхи çулсенче «Чăваш коммунинче» ĕçленĕ Николай Никитич Никитин /Пиктемир/ тата Максим Григорьевич Ястран /Григорьев/ хаяр вăрçа пулах редакцие таврăнайман. Н.Пиктимир, хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне тăнăскер, 1943 çул вĕçĕнче пĕр çапăçура вилмеллех аманнă. М.Ястран 1942 çулхи кĕркунне Сталинградшăн пынă çапăçура пуç хунă.

Вăрçăра вилнĕ журналистсен ячĕсене «Хыпар» хаçат коллективĕ манăçма памасть. Вĕсен ячĕсене «Астăвăм» кĕнекине тата Пичет çуртĕнчи Асăну хăмине кĕртнĕ.

■ **Галина МИХАЙЛОВА.**

Шупашкар хули

## «Килĕшӳ çулĕ çине таврăнмалла»

«Украинăри лару-тăру пире питĕ пăшăрхантарать... – тенĕ Раççей Президенчĕ Владимир Путин. – Киеври конституцие хирĕçле переворот, Украина халăхне Европăпа Раççейрен пĕрне суйласа илме искусствăлла майпа хистени обществăна пайласа ячĕç, шалти хирĕç тăрăва çуратрĕç». Çакăн çинчен «Новости» РИА пĕлтерет. Çав вăхăтрах Президент Украинăн «тăнăçлăх, диалог, килĕшӳ çулĕ çине таврăнмаллине» тепĕр хут палăртнă.

**«Газета.Ru»**

РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2006@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:060201:215, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, для огородничества, общей площадью 201 кв.м., заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ «МФЦ», с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

Администрация Чагасьского сельского поселения Канашского района информирует население района о предстоящем предоставлении земельного участка в аренду сроком на 20 лет.

Категория земель - земли сельскохозяйственного назначения. Разрешенное использование - для сельскохозяйственного производства.

| №п/п | Месторасположение | Кадастровый номер | Площадь, кв.м. |
|---|---|---|---|
| 1 | Канашский район, с/пос. Чагасьское, земельный участок расположен в центральной части квартала | 21:11:220402:3 | 614011,0 |

Желающим приобрести вышеуказанный земельный участок обращаться с заявлением в администрацию Чагасьского сельского поселения Канашского района по адресу: Канашский район, д. Чагаси, ул. Центральная, д. 17, в течение 30 дней со дня опубликования, тел. 8(83533) 64-1-24.

САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"

Уважаемые работники образовательных и медицинских учреждений!

Санаторий "Надежда" только с 1 июля по 31 августа 2014 года предлагает Вам санаторно-курортные путевки /10 дней/ по сниженным ценам: ~~19500~~ руб. 18000 руб.

КВАШИМ УСЛУГАМ: ● высококвалифицированный персонал, ● современное оборудование, ● уникальные методы лечения различных заболеваний, ● сауна 2 раза в неделю, ● ежедневно большой бассейн и бассейн с мин. водой.

Справки по тел.: /8352/ 77-04-04, 77-12-70.

Спешите, количество мест ограничено!

Лицензия ЛО-21-01-000816 от 14.02.2013 выдана Минздрав и соцразвития Чувашской Республики

ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ,ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ



ЗАВОД ООО «ЖБК-2»



ЖЕЛЕЗОБЕТОННЫЕ ИЗДЕЛИЯ ВСЕХ ВИДОВ
КЕРАМЗИТОБЕТОННЫЕ БЛОКИ
КОЛЬЦА КОЛОДЦЕВ
БЕТОН, РАСТВОР ВСЕХ МАРОК
НЕЛИКВИДЫ ЖБИ
ОТХОДЫ ДРОБЛЕННОГО БЕТОНА
ДОСТАВКА ПО РЕСПУБЛИКЕ
СЕРТИФИЦИРОВАННАЯ ЛАБОРАТОРИЯ

Телефоны: (8352) 73-74-66, 73-08-97





СТРОИТЕЛЬНАЯ КОМПАНИЯ ЦЕНТР

БЕТОН РАСТВОР ДОСТАВКА

г. Чебоксары, ул.Пристанционная, 7

(8352) 76-56-00, 63-80-08



БЕТОН всех марок (М-200 - 2900 руб./куб.)
РАСТВОР
ОПГС
КЕРАМБЛОКИ (КБ-20 - 33 руб./шт)
ДОСТАВКА
тел.: 29-25-34, 29-24-88



ТРЕБУЮТСЯ:
отделочники, разнорабочие, бетонщики, арматурщики.
Вахта в Ленинградской области.
Т.: 8-921-587-69-52, 8- 911-265-79-07.


## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**385.Требуются плотники.** Т. 483900.

**422.**Предприятию в МО **требуются фасовщицы, грузчики.** Граждане РФ без в/п. Предоставляется общежитие, оформление по ТК. Т.: 8-965-445-11-47, 8-965-445-11-48.

## УСЛУГИ

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 89278477143, 89373790080.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 89603021293.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

**250.Кровельные, фасадные работы**. Монтаж водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м. Т. 8-906-381-60-37.

**339.Бурение скважин** на воду. Т. 89196637746.

**346.Бурение скважин** на воду. Гарантия. Т. 364060.

**359.Бурение колодцев. Продажа** колодезных колец. Доставка и установка. Т. 89033790901.

**416.Экстрасенс.** Т. 89876603929.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**420.Доставка щебня,** песка, **гравмассы,** керамзита, чернозёма. **Услуги** самосвала. Т. 89876692941.

**434.Печник-профессионал.** Т. 89373921007.

**449.ОКНА, МЕБЕЛЬ** – по оптовым ценам. Т. 8-987-576-92-32.

**456.Услуги КаМАЗа**-55102, **ф/погрузчика. Доставка** песка, щебня, кирпича, гравмассы. Сертифицированы. Т. 89033893039.

**459.Установка** заборов, ворот, винтовых свай. Т. 89176500640.

**460.Обшивка** домов сайдингом, **утепление.** Т. 89022872777.

**462.Бурение скважин** на воду. Гарантия. Т. 89063871363.

## РАЗНОЕ

**458.**Утерянный студ. билет, выд. филиалом ФГБОУ ВО «Санкт-Петербургским госуд. экономическим университетом» в г. Чебоксары на имя Ивановой Е.О., считать недействительным.

## СУТАТĂП

**168.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Тел. 8-917-066-41-46.


www.profilch.ru
ПРОФИЛЬ ПРОФНАСТИЛ СОБСТВЕННОЕ ПРОИЗВОДСТВО
ангары,
КОМПЛЕКТУЮЩИЕ ДЛЯ КРОВЛИ, ВОДОСТОКИ, ДЫМНИКИ
МОНТАЖ ЗАБОРОВ
тел. (8352) 22-95-45, 63-82-85



РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07


## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, **песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.Песок,** гравмассу, чернозём, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **навоз, чернозём.** Дёшево. Д-ка. Т. 8-903-358-30-21, 443021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём, навоз.** Дёшево. Доставка. Т. 89276689713.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 444433.

**15.Кирпич** – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 8-961-339-33-63.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, керамзит, щебень.** Д-ка. Т. 8-903-322-57-66.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 89022881447, 38-75-74, metalservis21.ru

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: **89176529694, 89276679588.**

**23.Гравмассу, песок,** бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 8-927-853-35-96.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/кольца. Доставка. Т. 89033468556.

**28.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 8-937-010-10-54.**

**30.ОКНА** от 5900 руб. **Москитная сетка** – в подарок. **Акция** действует до конца месяца. Предложение ограничено. Звоните по тел. 8-937-954-92-45.

**33.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 89373866629.**

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 89674702736.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 8-987-666-41-40, 89370100141.

**46.БРУСЧАТКУ, тротуарные плиты** – дёшево. Т. 8-903-358-77-72.

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **цемент М-500.** Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, берёза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова,** горбыль. Т. 89033891400.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 89033220479.

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**103.Кирпич, керамблоки, кольца,** цемент. Доставка. Тел. 213680.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**124.Песок,** щебень, **гравмассу,** керамзит, **торф,** кирп. бой, **цемент.** Т. 89033220479, 48-04-79.

**128. Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 5 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**221.Профнастил, металлочерепицу, водостоки,** металлосайдинг. Доставка. Замер. Строительство. Т. 89196534368.

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 8-937-391-86-48, 8-927-853-57-32.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит,** песок в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

**253.КВАДРОЦИКЛ** новый, бензиновый – 35000 руб. Т. 8-927-668-98-39.

**294.Песок, гравмассу,** щебень, бой кирпича. **Услуги КамАЗа.** Тел. 89053419146.

**308.Гравмассу, щебень, к/б блоки.** Доставка. Т. 89278462410.

**316.Гравмассу,** песок, **керамзит,** щебень, бой кирпича, **к/б блоки.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**323. Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, **бетон,** раствор всех марок. Недорого. Т. 89613409305.

**326.Гравмассу,** керамблоки, **песок,** керамзит, **щебень** – недорого. Доставка. Т. 89603128952.

**355.Песок, гравмассу, щебень.** Доставка. Т. 89053479783.

**376.**Дизельное **топливо** по 25,50 руб. Доставка договорная. Т.: 89196529616, 38-80-12.

**390.Блоки, кирпич** красный, силикатный; **гравмассу,** песок, **керамзит, кольца.** Т. 89278629166.

**406.Керамблок** 20х20х40, 12х20х40; **гравмассу,** песок, **керамзит.** Доставка. Т. 8-987-129-70-72.

**408.Керамблоки** 20х20х40 от производителя, **цемент** М-500. Т.: 36-26-23, 89033797768.

**415.Кольца колодезные** от производителя. Д-ка. Т. 89278416247.

**445.Крупнопанельный жилой дом** с газовым отоплением, надворными постройками /пластиковые окна/, огород 30 с. Асфальт до дома. Цена договорная. А.: Марпосадский р-н, с. Астакасы. Т. 8-905-342-98-52.

**450.КЕРАМБЛОКИ** пропаренные, вибропрессованные – **недорого.** Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**454.ПИЛОМАТЕРИАЛ** от производителя – **любой,** крепежные изд., **утеплители,** гидропароизоляция. Доставка. Т.: 376901, 440447.

**455.Пресса:** ПРФ-180, ПРП-1,6 /ременный/, немецкий К-454; **копалки:** навесную, прицепную; **сортировки:** ОВС-25, СМ-4, «Петкус»; плуги; **грабли** – для трактора, мотоблока /конные/; запчасти на косилку, зерномет ЗМ-60, ЗПС-100. Т. 89053414524.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-903-065-99-09.

**433.КОРОВ.** Т. 8-927-850-85-64.

**452.ДОМ с участком** в любом состоянии. Тел. 89603008787.

# Паркра – «Туслăх кăшăлě»



*Республика кунěнче вун виççěмěш хут ěнтě Чăваш Енри наци культура пěрлěхěсен пултарулăх ушкăнěсен «Туслăх кăшăлě» фестивалě иртрě. Ялгнхиллех ăна тěп хулари «Шупашкар: 500» культурăпа кану паркě йышăнчě.*

Уява ЧР Культура министерствин этноконфесси хутшăнăвěсен пайěн пуçлăхě С.Казаков, Мускав район администрацийěн пуçлăхě А.Петров уçрěç. Фестивале хутшăнакансене тата уявпа паллашма пынисене Республика кунěпе саламланă май наци культура пěрлěхěсен ячěпе те ырă сăмахсем каларěç. Шăпах вěсем-çке Чăваш Енре пурăнакан тěрлě халăхăн культурипе хăй евěрлěхне сыхласа хăварма тата малалла аталантарма пулăшаççě.

Кăçалхи «Туслăх кăшăлě» республикăри, çавăн пекех Беларуçри, Чул хула, Пенза, Свердловск, Самар, Эрěнпур, Сарă ту, Чěмпěр облаçěсенчи, Тутарстанпа Пушкăрт Республикинчи тата Севастопольпе Екатеринбург хулисенчи наци культура пěрлěхěсемпе центрěсен пултарулăх коллективěсене пуçтарчě. Фестивале хутшăннисене дипломсемпе хавхалантарчěç.

**Надежда СМИРНОВА**

# Театр ěççенěсем – "улахра"

Республикăри профессионал театрсенче сезон вěçленнěпе пěрех, çавăнпа иртнине пěтěмлетсе тивěçлě хак пама, малашлăх тěллевěсене палăртма вăхăт çитнě темелле. Çак тěллевсемпех çěртме уйăхěн 19-мěшěнче Чăваш патшалăх филармонийěн Пěчěк залěнче ЧР Театр ěççенěсен союзě «пěрремěш çыннисем» пуçтарăнчěç. Калаçăва хутшăннисен хушшинче – Михаил Кондратьев музыковед, Чăваш патшалăх культурăпа искусство институчěн актер ăсталăхěн кафедрин ертÿçи, Раççей халăх артисчě Николай Григорьев, Вырăс драма театрěн прими Антонина Баулина, Иосиф Дмитриев тата Станислав Васильев режиссерсем, К.В.Иванов ячěллě Чăваш патшалăх академи драма театрěн ертсе пыракан артисчěсем Геннадий Медведев тата Валерий Карпов, Антонина Мордвинова искусствовед, ыттисем.

Театрта ěçлекенсен хушшинче кунашкал «улахсем» сахал мар иртеççě. Хальхинче «кěрекене» пухăнма пысăк тěпěр сăлтав та пулчě: республикăри театр критикин ăславěн никěсне хываканě, наци сценин ыйтăвěсемпе çыхăннă вун-вун статья, темиçе монографи авторě Фаина Романова çуралнăранпа 90 çул çитрě. Паллă театроведăн пурнăçěпе пултарулăхě çинчен Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхěсен институчěн ěçченě Алексей Трофимов искусствовед каласа кăтартрě. Фаина Александровна кун çути кăтартнă тěп кăларăмсем: «Борис Алексеев», «Возникновение и развитие чувашского драматического театра», «Ольга Ырзем», «Театр, любимый народом», «Чувашскому музыкально-драматическому театру – пятьдесят лет» тата ыттисем те.

Çамрăк музыковед, Чул хула консерваторийěнчен вěренсе тухнă театр критикě, халě Чăваш патшалăх оперăпа балет театрěн литературăпа драматурги пайěн ертсе пыракан специалисчě Мария Митина республикăри театрсен ěçě-хěлě, иртсе пыракан сезонри премьерăсем пирки чарăнса тăчě. Унăн калаçăвěн пěр саманчě Чăваш Ен сценисем çинче ютран чěнсе илнě режиссерсем сахал ěçленипе çыхăннă. Ку енěпе, сăмахран, кÿршě регионсенчен тěслěх илме сěнчě. Вěсенче ку енěпе тахçанах ăнăçлă ěçлеççě. Çапах та хамăрăн та «пăр кăштах тапранчě» темелле. Акă Çеçпěл Мишши ячěллě Чăваш патшалăх çамрăксен театрě пěлтěр Ěпхÿри паллă Айрат Абушахманов режиссера йышăнчě, вăл Б.Брехтăн «Мамаша Кураж и ее дети» ěçне сцена çине кăларчě. Станислав Васильев лартнă «Лир патша» /У.Шекспир/ спектакль те, Иосиф Дмитриевăн «Чěрě сăмахě» те театр пурнăçěнче çутă сăнпа палăрса юлчěç. Çěнě сезон та ăнăçлă пуласса шанатпăр.

**Мария ЕВСЕЕВА**

# Гороскоп

***Çěртме, 30 - утă, 6***

**Сурăх.** Юлташăрсем çивěч ыйтăвăрсене татса пама хатěр. Савнийěрпе /мăшăрăрпа/ пěр чěлхе тупма – çывăх тусăр /тунти кун/, тивěçсене пурнăçлама – ěçтешěрсем /юн кун/, юридици хучěсене пухма аçăр-аннěр /кěçнерни кун/ пулăшěç. Эрне вěçěнче кил-тěрěшри ěçсемпе аппаланатăр.

**Вăкăр.** Ку эрнере эсир пысăк йăнăшсем тума пултаратăр. Тěмěнле хыпалантарсан та ыйтăва пěлмесěр ан хуравлăр /юн кунччен/. Кěçнерни кун илтнě сас-хура пирки юлташăрсене калама ан васкăр – "çиччě виççе пěрре кас" тенине шута илсе тěплě шухăшлăр. Туйăмăрсене çывăх çыннăра пěлтерме ан шикленěр /юн кун/.

**Йěкěреш.** Иртнě эрнере çул çинче нумай пулма тÿр килнě тěк халě килте тăрмашатăр. Тусăрсене хăнана чěнетěр /тунти кунпа вырсарни кун/, сăн-питěре илемлететěр /ытлари кун/, мăшăрăрпа /савнийěрпе/ пěрле /кěçнерни кун/ Совет тапхăрěнче ÿкерне кинокамитсем куратăр, аçăр-аннěр патне çитсе килетěр /шăмат кун/.

**Рак.** Йăлтах кěтмен çěртен пулě. Тăванăрсем хăнана систермесěрех килěç /тунти кун/. Пуçлăхăр улшăнусем пулассине пěлтерě /кěçнерни кун/ – ан пăшăрханăр: ěççěр юлмастăр. Палăртман пулсан та эрне кун пасара тум туянма тухатăр. Шăмат кун çывăх çыннăрсем парнепе савăнтарěç, вырсарни кун кăмăллă хыпар илтетěр.

**Арăслан.** Асăрханулă пулăр: ним шухăшламан çěртен йěрке хуралне çакланас хăрушлăх пур. Палламан çынсемпе калаçу ан пуçарăр, çул-йěр çинче асăрханулă пулăр /уйрăмах ытлари кун/. Эрне кунпа шăмат кун чылайăха асра юлмалла иртěç: ташă каçне çитсе килетěр, паркра уçăлса çÿретěр, туссемпе тěл пулса çěнě хыпарсене сÿтсе яватăр.

**Хěр.** Умра – хаваслă калаçусем, кăсăклă тěл пулусем... Хăшě-пěри отпускпа усă курса çул çÿреве тухě /ытлари кун/, теприсем ташă каçне кайěç /юн кун/, виççěмěшěсем çěнě ěçпе кăсăкланěç /кěçнерни кун/. Чылайăшě кинотеатра е курав центрне çитме те май тупě.

**Тараса.** Ěç пуçарма ăнăçлă тапхăр. Çакăн пирки ěмěтленекенсем тунти кун пěр иккěленмесěрех докумéнтсем хатěрлемешкěн тытăнма пултараççě. Пÿрт купалама палăртнă пулсан пěрремěш кирпěче кěçнерни кун хурсан аван. Пысăк проекта пурнăçа кěртес тетěр тěк эрне кун ěçе пикенěр. Унсăр пуçне те кăмăла çěклеме сăлтав пулě: унччен çухалнă япаласем шăмат кун тупăнěç.

**Скорпион.** Сирěн тăрăшулăха пуçлăхăр асăрхě, ěçтешěрсен умěнче тав сăмахě калě, премипе хавхалантарě /тунти кун/. Темиçе çул каялла пуçăннă ěç тупăш кÿме тытăнě /юн кунран/. Диетăна пăхăннин те усси пулě – самаях начарланатăр /кěçнерни кун тараса çине тăрса пăхăр/. Çакна тусăрсем çийěнчех асăрхěç.

**Ухăçă.** Эрне пуçламăшěнчех ěçлě тěл пулăва хутшăнма, пухăннисен умěнче тухса калаçма тивě. Тунти кун ěçтешěрсен сěнěвěсене пăхса тухса тишкермелле пулě. Кěçнерни кун тăванăрсен канашне шута илěр. Ахăртнех, вěсенчен пěрне сирěн пулăшăвăр кирлě. Эрне кун хěрсене – качча тухмашкăн ыйтма, авланманнисем савнине çемье çавăрмашкăн ÿкěтлеме пултарěç.

**Ту качаки.** Çулла пулин те Ту качакисем ăс пухассишěн хыпкаланаççě. Ятарлă курса çырăнăр /тунти кун/, çěнě профессисене кăсăкланăр /ытлари кун/, кăмăл-сипет пирки шухăшлăр, кěнеке нумай вулăр /кěçнерни кунпа эрне кун пушă вăхăт тупăнě/. Канмалли кун пěр-пěр курава çитсе килěр.

**Шыв тăкан.** Ку эрнери мěн пур пăтăрмах укçа-тенкěпе çыхăннă. Тунти кун кивçен паратăр, юн кун вара хăвăрăн çынран ыйтмалла пулě. Кěçнерни кун шалу илетěр кăна, шăмат кун пěтěмпех тăкаклатăр. Эрне кун банка кěрсе тухатăр, вырсарни кун кирлě мар япала туянса юлашки пуса пěтеретěр.

**Пулăсем.** Çуралнă кунăр тахçанах иртнě пулин те ку эрнере çěлтăрсем сире харăсах темиçе парнепе савăнтарěç. Тунти кун тахçанхи ěмěтěр пурнăçланě, юн кун ача чухнехи тусăртан ырă хыпар илтетěр, эрне кун темиçе уйăх канăç парман ыйтăва уçăмлатма май килě. Канмалли куна та савăк кăмăлпа ирттеретěр.

## Çанталăк



кăнтăрла çěрле

| | | |
|---|---|---|
| 28.06 | + 18 | + 8 |
| 29.06 | + 10 | + 9 |
| 30.06 | + 18 | + 14 |
| 01.07 | + 24 | + 16 |
| 02.07 | + 27 | + 17 |
| 03.07 | + 28 | + 17 |
| 04.07 | + 25 | + 16 |


чăваш халăх хаçачě
ХЫПАР

Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечě, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчě" Чăваш Республикин автономи учрежденийě

Федерацин çыхăну, информаци технологийěсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор служибин Чăваш Республикинчи управленийěнче 2013 çулхи çу уйăхěн 31-мěшěнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленě

"Хыпар" индексě – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тěп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторě Г.А.МАКСИМОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тěп редактор çумě-коммерци директорě/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тěп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тěп редактор çумě/
С.Л.ПАВЛОВ /тěп редактор çумě/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайěн редакторě/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрěн пуçлăхě/

Дежурнăй редактор И.В.ИВАНОВА

Редакципе издатель адресě: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĚ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĚ, III ХУТ, "Хыпар".

ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонěсем:
56-00-67 – директор-тěп редактор
56-33-64 – тěп редактор çумě
56-04-17 – тěп редактор çумě
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçěпе политика пайě
56-05-21 – журналист тěпчевěсен тата куçару пайě
56-08-62 – экономика пайě
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вěренÿ пайě
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайě
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайě
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64

коммерци дирекцийě,
28-83-70 – рекламăпа пěлтерÿсен пайě
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайě, hypar2008@rambler.ru

корр. пункчěсем:
8-937-398-75-33 – Хěрлě Чутай
/8-835-38/2-18-02, 2-11-95 – Йěпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзěн правленийě

Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчě» АУ техника центрěнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийěнче пичетленě. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчě, 13. 56-00-23 – издательство директорě.

РЕКЛАМĂПА ПĚЛТЕРЎСЕНЕ 316-мěш пÿлěмре йышăнаççě. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечě. Калăпăшě 2 пичет листи. Рекламăпа пěлтерÿсен чăнлăхěшěн вěсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тÿлевлě информаци материалěсем "Реклама çинчен" федераци саккунěн 2 ст. килěшÿллěн "Аталану çулěпе", "Ят-сум", "Ěç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççě.

Номере 27.06.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 8448. Заказ 2355.

Ěç кунě 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.